24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 ЯНВАРЬ 29 КĔÇНЕРНИКУН 24 (6049) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ПРОИЗВОДСТВĂРИ КАШНИ КОММУНИСТĂН СТАХАНОВЕЦ ПУЛМАЛЛА

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче парти организацийĕсем политикăллă-агитациллĕ тата ăнлантаруллă ĕçе вăйлатрĕç, пĕтĕм ĕçе фронт интересĕсемпĕн туса пыма тытăнчĕç. Вăрçă пуçланиччченех республикăри чылай предприятисемпе артельсем хăйсен ĕçне график тăрăх туса пыма пуçларĕç. Талăкра, эрнере тумалли ĕçсен графикне тултарасси—предприятисен ĕçĕнче закон пулса тăчĕ. Çакă вăра производство планне пурнăçлассишĕн пыракан кĕрешĕве вăйлатрĕ, производствăри ĕç дисциплинине çирĕплетрĕ.

Вăрçă условийĕ пирĕн предприятисемпе промартельсен продукци хисепне нумай хут ÿстерме задача лартрĕ. Производствăн талăкри графикĕ те пысăкланчĕ. Ăна куллен пурнăçласа пырассишĕн нумайрах вăй хурса ĕçлемелле. Производство графикне ăнăçлăн пурнăçласа, фронта кирлĕ продукцисене ытларах туса парасси—заводсемпе артельсенчи парти организацийĕсен чи малти вырăнта тăракан обязанноçĕ пулса тăчĕ. Предприятисен коллективĕсене стахановла ĕçе мобилизацилесе, производство планне ытлашшипех тултарма парти организацийĕсем предприятисен руководителĕсене татăклăн пулăшса пыраççĕ.

Талăкри графика куллен пурнăçласа пырас ĕçе уйрăмах васкавлă заказсене тăвакан предприятисемпе промартельсенче лайăх йĕркелемелле. Фронтăн васкавлă заказĕсене хăвăрт тата пысăк пахалăхпа пурнăçласа тăрасси—парти организацийĕсен чи хисеплĕ задачи пулса тăрать. Партин предприятисемпе промартельсенчи организацийĕсен васкавлă заказсене хăвăрт пурнăçлас ĕçре коммунистсен ответлăхне ÿстермелле, завод, цех, артель мĕн пама пултарнипе йăлтах усă курмелла, вĕсен техникăллă вăйне туллин ĕçлеттерсе оборона ыйтăвĕсене пурне те хăвăрт пурнăçламалла. Пирĕн республикăри хăшпĕр предприятисенчи парти организацисем çак ĕçе чыслăн туса пыраççĕ.

Канашри вагонсем юсакан завода иртнĕ çулти декабрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче васкавлă заказ панă. Ăна пурнăçлас ыйтăва цехри коммунистсем хăйсен пухăвĕнче сÿтсе-явнă. Коммунист-специалистсем хăйсен шухăшĕсене тата тумалли ĕçĕн майĕсене кăтартса панă. Кун хыççăн васкавлă заказа пурнăçлама тивĕç рабочисен производствăллă канашлăвĕ пулса иртнĕ. Унта ĕç майĕсене анлăн сÿтсе-явнă хыççăн парти организацийĕ ответлă заказа хăвăрт пурнăçлама заводăн пĕтĕм коллективне мобилизациленĕ. Стахановец-работисем заказа хăвăрт пурнăçлама обязательствăсем илнĕ. Нумай рабочисем заказа пурнăçланă чухне ĕç нормине 200—300 процент таран тултарса ĕçленĕ. Анчах заказа çителĕклĕ таран пурнăçлама материалсем çитменни куранчă. Çак ыйтăва заводри парти бюровĕ производство командирĕсемпе пĕрле хăйĕн ларăвĕнче сÿтсе-явса татса панă. Парти организацин пуçарăвĕпе вырăнтах материалсем тупса васкавлă заказа завод коллективĕ чыслăн пурнăçланă.

«Авангард» промартельре коммунистсен йышĕ пĕчĕккĕ пулсан та, производствăра вĕсем пуçаруллă руководительсем пулса тăраççĕ. Комсомолецсемпе тата ĕçре малта пыракан беспартийнăй большевиксемпе пĕрле вĕсем васкавлă заказсене хăвăрт тата пысăк пахалăхпа пурнăçласа пыраççĕ.

«Авангард» промартель — çĕвĕ çĕлекен артель мар. Анчах артель коллективне васкавлă заказ пурнăçлама хушнă. Заказа пурнăçлама артелĕн хăвăрт çĕвĕ çĕлекен цех организацилеме тивнĕ. Ыйвăр ĕç, анчах вăхăт ыйтать, тем пулсан та, ăна хăвăрт пурнăçламалла. Коммунистсемпе комсомолецсен пуçарăвĕпе, вĕсем тăрăшса тимлĕн ĕçленипе артель çĕвĕ цехне кĕске срокра организациленĕ, кĕске вăхăтра ĕçе вĕренсе çитсе, артель 12 тĕслĕ продукци туса панă. Иртнĕ çулти октябрь уйăхĕнчен пуçласа, артель ĕç планне кашни уйăхрах 150 процент тултарса ĕçлет. Халăх пухса панă çăмран план тăрăх 1650 мăшăр çăматă йăваламалла пулнă пулсан, вĕсем Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем валли 2.225 мăшăр çăматă йăваласа панă.

Фронт заказĕсене васкавлăн пурнăçласа пырасси предприятисенчи кашни коммунистăн чыслă обязанноçĕ пулса тăмалла. Анчах çакна пур çĕрте те мар ăнланса илнĕ-ха. Канаш районĕнчи «Красный воин» промартель хăйĕн ĕçĕсене япăх мар пурнăçласа пырать. Партин артельри пуçламĕш организацийĕ производство ĕçĕпе интересленсе ертсе пырать. Анчах пур коммунистсем те мар кирлĕ пек ĕçлеççĕ. ВКП(б) райкомĕ хушнипе артельри парти организацин секретарĕ пĕр вăхăтра правительство заданине пурнăçлама кайнă. Хăйĕн ĕçне малалла туса пыма вăл коммунист Носков юлташа хушса хăварнă. Ĕçе тивĕçлипе тытăнса артель ĕçне ертсе пырас чухне коммунист Носков икĕ уйăх хушши нимĕн тумасăр ларнă. Производствăн ĕçĕсемпе интересленме мар, парти организацин шалти ĕçĕсене те туса пыман.

Парти организацийĕсен, заводсен дирекцийĕсемпе, артельсен председателĕсемпе пĕрле, ĕç нормине кашни рабочи иртерсе пурнăçламалла тăвассишĕн кĕрешмелле. Уйрăмах çамрăк рабочисене пулăшса пымалла, вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсен — двухсотниксемпе трехсотниксен йышне ÿстермелле. Ĕç кунĕпе туллин усă курса, завод оборудованийĕпе кирлĕ таран усă курса, коммунистсен производствăра пример кăтартса пымалла.

Производствăна хăпартас, цехсенче большевикла йĕркелĕх тăвас тĕлĕшпе стахановец-двухсотниксен канашлăвĕсене тăтăшах туса иртермелле. Заводсенчи агитпунктсем агитациллĕ-масăллă тата ăнлантаруллă ĕçе анлăн сарса пыракан центрсем пулса тăмалла. Рабочисен коллективĕнче совет патриотизмĕн туйăмне, хамăр тăван çĕршыва вĕçĕмсĕр юратас туйăма хăпартмалла.

Партин предприятисемпе промартельсенчи пуçламĕш организацийĕсен, пĕтĕм ĕçе фронт ыйтнă май организацилесе, васкавлă заказсене кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа пурнăçласа пырассишĕн çине тăрса ĕçлемелле.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 27-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Январĕн 27-мĕшĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен войскисене хирĕç çапăçса малалла наступлени туса пынă. Гитлеровецсем, совет войскисен наступленине тытса чарма хăтланса, хăйсен резервĕсене çапăçăва кĕртсе пынă. Тăшман контратакисене сирсе пырса тата противник хирĕç тăнине çĕмĕрсе, пирĕн чаçсем малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Январĕн 26-мĕшĕнче нимĕçсен 39 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 8 самолет пĕтнĕ.

Январĕн 27-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 4 самолетне персе антарнă.

* * *

Январĕн 26-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен танкне, кутăпа грузсем турттарса пыракан 27 автомашинине, боеприпассем турттар[са] пыракан 220 лавне, 11 орудине прис[...]мĕнĕпех, зенитнăй пулеметсен точкине пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи 80 вагона аркатнă, чугунçул çинчи 3 эшелона тивертсе янă, самолетсем юсамалли завода тата 2 ангарăна çĕмĕрнĕ, противник пехотин пĕр полкне сапаласа ярса, пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕвелтухăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче каялла чакакан противника хăваласа пыракан пирĕн часть нимĕçсене 2 танк, 13 автомашина, 9 пулемет, 6 мотоцикл, радиостанци тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче гитлеровецсене вăйлă çирĕплетнĕ вырăнтан хĕссе кăларнă, нимĕçсенне 2 танк, 4 пулемет тытса илнĕ. Противник салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна вĕлернĕ.

* * *

Калинин фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть халăх пурăнакан И. пункта нимĕçсенчен ирĕке кăларнă. Çапăçу хирĕнче Гитлер салтакĕсемпе офицерĕсен 300 вилли выртса юлнă.

* * *

К. районĕнче нимĕçсен 12 салтакĕпе 2 унтер-офицерĕ хăйсен ирĕкĕпе, хĕçпăшалĕ-мĕнĕпех, тыткăна парăннă.

* * *

Вышгородшăн пулнă çапăçусенче пирĕн танк экипажĕ нимĕçсен пулемечĕсен 11 йăвине, 4 миномет́не пĕтерсе тăкнă, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна стройран кăларнă.

* * *

Украинăн нимĕçсем йышăнса илнĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен К. юлташăн партизанла отрячĕ 2 уйăх хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 4 танкне, боеприпассемпе грузсем тиенĕ 80 автомашинине пĕтерсе тăкнă, нимĕçсенне 50 çын ытларах, вăл шутрах çăмăл автомашинăпа пыракан 2 генерала, вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен 11-мĕш танковăй дивизийĕнчи 51-мĕш мотострелковăй батальонăн 1-мĕш ротинчен январĕн 23-мĕшĕнче тыткăна парăннă обер-ефрейтор Гейнс Гейзе çапла каласа панă: «11-мĕш дивизи хăйĕн личнăй составĕнчен 70 процентне çухатрĕ. 61-мĕш мотострелковăй батальонра малтан 900 салтак пулнă. Халĕ батальонăн 2 ротинче 200 çынна яхăн çеç тăрса юлнă. Юлашки эрне хушшинче кăна пирĕн ротăри 60 салтака тăм илсе янă. Батальонри мотоциклсем пурте стройран тухнă».

* * *

Нимĕç ефрейторĕ Гельмут Рот патне нумаях та пулмасть амăшĕ Берлинран çапла çыру янă: «Ĕнер эпĕ лазарета ĕçлеме кайрăм. Татах аманнисене нумай илсе килчĕç. Вĕсем хушшинче питĕ çамрăккисем те чылай. Аманнисен мĕскĕн сăн-сăпачĕ манăн кăмăла пăтрататъ».

* * *

Орел облаçĕнчи Лимовое ялĕнче гитлеровецсем тискер кайăкла ĕçсем туни çинчен çарти медицина работникĕсен группи акт çырнă. Тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх тата ялти çынсенчен ыйтса пĕлнĕ тăрăх çакна палăртнă: Лимовое ялĕнчен чакса тухса кайнă чухне нимĕçсем ялти 44 çуртран 42 çурта вут тивертсе çунтарса янă. Çунмасăр юлнă 2 çуртăн подвалне ялти стариксене, хĕрарăмсемпе ачапăчасене 25 çынна хăваласа пухнă та унта темиçе граната пăрахнă. Çакна пула 7 çын вилнĕ, ыттисем аманнă. Аманнисем хушшинче—14 çулти Александра, 12 çулти Мария, 10 çулти Александр тата 9 çулти Фаина Мальцевсем; 15 çулти Ольга Силютина; 13 çулти Мария Семерыхина. Акт çине полевой госпиталĕн начальникĕ 3-мĕш рангри военврач Шапиро, хирурги отделенийĕн начальникĕ 2-мĕш рангри военврач Холодцев, аманнисене йышăнса госпитальсем тăрăх валеçекен отделенин начальникĕ 3-мĕш рангри военврач Лебедев, врач-ординатор 3-мĕш рангри военврач Казакова тата красноармеец Безумский алă пуснă.

* * *

Тбилисири паровозсем юсакан заводра ĕçлекен стахановецсем К. Илуридзе, Ф. Жадаев, А. Попов тата К. Соврели хăйсен сменăри нормисене тăтăшах 3—4 хут ытларах тултарса пыраççĕ.

Январĕн 28-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Январĕн 28-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса малалла наступлени туса пынă.

* * *

Старший лейтенант Харитонов ертсе пыракан боецсен группи (Хĕвеланăç фрончĕ), тăшман батальонне хирĕç хаяррăн çапăçса, нимĕçсене халăх пурăнакан пĕр пунктран хĕссе кăларнă. Çапăçу хирĕнче противникăн вилсе тата аманса 350 çын выртса юлнă. Тепĕр участокра Илларионовпа Балашов юлташсем командир пулса ертсе пыракан икĕ подразделени тăшманăн танксем парса вăйлатнă виçĕ ротин контратакине сирсе янă. Противник нимĕн йĕркесĕр каялла чакнă, унăн салтакĕсемпе офицерĕсем 100 çын ытла вилсе юлнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн боецсем пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 40 пункта ирĕке кăларнă тата пĕр танк, 5 оруди, 7 пулемет, 8 миномет, 70 автомашина, 4 рации, 106 лаша, телефон аппарачĕсем, боеприпассем тата ытти трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Топуридзе юлташ командир пулса ертсе пыракан йĕлтĕрçĕсен отрячĕ нимĕçсен тылĕнче 200 километр таран çÿренĕ, 3 танк, бронемашина, 6 оруди, 150 грузовик тытса илнĕ.

* * *

Çĕмрĕк танкра нимĕçсем пулемет вырнаçтарнă та унтан пирĕн позицисем çине персе тăнă. Ягупов сержантпа Яковлев красноармеец тăшман танкĕ патне шуса пынă, 4 нимĕçе вĕлернĕ те 2 пулемета илсе хăйсен подразделенине чиперех таврăннă.

* * *

Нимĕçсен 263-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 463-мĕш полкри 11-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Эвальд Корнели çапла каласа панă: «Пирĕн полк фронта Францирен иртнĕ çулти октябрьте килчĕ. Полкăн питех те пысăк çухатусем пулчĕç, унта халĕ 500 çынран та ытла мар. 11-мĕш ротăра пĕтĕмпе те 14 салтак çеç юлчĕ, ыттисене пурне те амантнă, вĕлернĕ, 20 салтака вара, урисене тăм илнĕ пирки, лазарета ăсатнă. 12-мĕш ротăра юлашки вăхăтра 9 салтак ятарласах хăйсене хăйсем амантнă».

* * *

Фашистла захватчиксенчен ирĕке кăларнă Пупково ялĕнче гитлеровецсем асаплантарса вĕлернĕ икĕ красноармеецăн ÿчĕсене тупнă. Вĕсен сăмсисене татса илнĕ, кăкăрĕсем çинче çăлтăрсем касса кăларнă. Иккĕшне те штыкпа чиксе вĕлернĕ.

* * *

Арменири ĕçсынисем производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тăваççĕ. Кафанри малта пыракан горняксем нормăна нумай хут ирттерсе тултараççĕ. Бурильщик Самсон Оганесян пĕр кунхи плана 760 процент тултарчĕ, Акоп Захарян—354 процент, Заик Бабуян—413 процент тултарнă. Бурщик Иван Рожков, 624 тонна руда кăларса, сменăри плана 2.480 процент тултарнă, 1.150 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Кафанри комбинатăн механически мастерскойĕнчи токарь Амазас Мовсесян пĕр кунхи задание 1.400 процент, слесарь Давид Окназарян 1.183 процент тултарнă.

ĂШĂ ТУМТИРСЕМ ПУХАС ĔÇЕ ВĂЙСĂРЛАТМАЛЛА МАР

Паттăр Хĕрлĕ Çар отечественнăй вăрçă фронтĕнче тăшмана вăйлăн çĕмĕрсе малалла куçса пырать. Нимĕç фашисчĕсен пыйтланса кайнă çарĕ Хĕрлĕ Çарăн вут-хĕмĕ айĕнче каялла, Хĕвеланăçнелле, васкасах чакса пырать. Хĕрлĕ воинсен паттăр ĕçĕсене мĕнпур тĕнчери малта пыракан этемлĕх тĕлĕнсе те савăнса сăнаса тăрать. Совет халăхĕ хăйĕн геройла воинĕсене мухтать, вĕсене чунтан юратнине ĕçпе кăтартса парать.

1942 çулăн малтанхи 20 кунĕ хушшинче Чăваш республикинчи ĕççыннисем паттăр Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çĕнĕрен 5.689 тир, 1.504 килограмм çăм, 154 кĕрĕк пиншак, тиртен çĕлетнĕ 52 жилет, 383 мăшăр çăматă, 1.097 мулаххай, 1.663 мăшăр перчаткăсемпе алшишсем, 843 мăшăр ăшă носкисемпе чăлхасем, 69 мăшăр ăшă кĕпе-йĕм, ватка пусса çĕлетнĕ 146 шалавар тата ытти ăшă япаласем те нумай пухса пачĕç.

Нумай çĕрте Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухасси куллен туса пыракан чыслă ĕç пулса тăчĕ. Элĕк, Вăрнар, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлесе парас ĕçе уйрăмах лайăх туса пыраççĕ. Çак 20 кун хушшинче Вăрнар районĕнчи ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 153 тир, 101 килограмм çăм, 87 мăшăр çăматă, 100 çĕлĕк, 54 мăшăр алшиш, 19 мăшăр носки тата ытти ăшă япаласем те чылай пухса панă. Ăшă тумтирсем пухас ĕç Шăмăршă районĕнче те тивĕçлипе пулса пырать. Январĕн 27-мĕш тĕлне Шăмăршă районĕнчи ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 250 тир, 103 килограмм çăм, 60 мăшăр алшиш тата ыттисене те нумай пухнă. ВКП(б) Шăмăршă райкомĕн секретарĕ Воронцов юлташ, ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен яланлăх комиссин председателĕ пулса тăрса, ĕçе тивĕçлипе ертсе пырать.

Пирĕн Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн паттăр воинĕсем, совет халăхĕн ирĕклĕхĕпе чыслăхне хăйсен пурнăçĕпе юнна шеллемесĕр хÿтĕлесе, нимĕçсен урнă бандичĕсене хирĕç хастаррăн кĕрешеççĕ. Вĕсем хаяр сивĕре те, витĕрех касакан çиллĕ сивĕ кунсенче те, куç-пуçа уçмалла мар çил-тăманлă кунсенче те пурĕ-пĕрех, ирсĕр тăшмана пĕр чарăнмасăр каялла хăваласçĕ, çĕршер ялсемпе хуласене фашизм пусмăрĕнчен ирĕке кăлараççĕ. Çак вăхăтра тăван Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсене ăшă тумтирсем тăхăнтарса пулăшни совет халăхĕн чыслăран та чыслă ĕçĕ пулса тăрать. Çав ĕçе пурнăçлассишĕн халăх куллен тăрăшать.

Анчах çакна Йĕпреç тата Çĕмĕрле районĕсенчи хăшпĕр руководительсем тивĕçлипе ăнланса илмен-ха. ВКП(б) Йĕпреç райкомĕн секретарĕ Артемьев юлташ çак ĕçе кирлĕ пек ертсе пымасть. Районри колхозсемпе учрежденисенче ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлеме 68 комисси организациленĕ. Анчах ВКП(б) райкомĕ комиссисен ĕçне япăх тĕрĕслесе пырать. Ку тарана çитсе 68 комиссирен 7-шĕ çеç хăйсен ĕçĕсем çинчен отчетсем тунă. Ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлеме организациленĕ районри комиссин председателĕ Захаров юлташ ĕçри ответлăха туймасть. Январĕн 20-мĕш тĕлне районĕпе мĕнпурĕ те 161 тир, 15 килограмм çăм, 3 çĕлĕк, 4 мăшăр алшиш çеç пухнă. Çавăн пекех Çĕмĕрле районĕнче те вăрçă фрончĕсенче паттăррăн кĕрешекен Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе тивĕçлипе организацилемен. ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ Вахнин юлташ, районри комиссин председателĕ Борисов çак ĕçе ертсе пымаççĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен ĕççыннисене ăнлантарса памаççĕ, çавăнпа районри пысăк предприятисемех, тĕслĕхрен, комбинат, çак ĕçе çителĕклĕн хутшăнман.

Совет Информаци Бюровĕ вăрçă фрончĕсенче пирĕн Хĕрлĕ Çар кунран кун пысăкрах çĕнтерÿсем тунине пĕлтерсе тăрать. Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсем, тăшмана фронтăн пур участокĕсенче те вăйлăн çĕмĕрсе, малалла куçса пыраççĕ. Хĕрлĕ Çарăн пысăк çĕнтерĕвĕсем пире татах та тимлĕн ĕçлеме, пĕтĕм вăя Хĕрлĕ Çара пулăшнă çĕре хума чĕнеççĕ.

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар вăйĕсен инженерно-технически составне çар званийĕсем парасси çинчен

Оборонăн Государственный Комитечĕн постановленийĕ тăрăх, Оборона Халăх Комиссарĕ çапла приказ панă:

1. 1942 çулти январĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар вăйĕсен инженерно-технически составĕ валли çакăн пек çар званийĕсем тăвас:

Техник-лейтенант,
Старший техник-лейтенант,
Инженер-капитан,
Инженер-майор,
Инженер-подполковник,
Инженер-полковник,
Авиацири инженернăй службăн генерал-майорĕ,
Авиацири инженернăй службăн генерал-лейтенанчĕ,
Авиацири инженернăй службăн генерал-полковникĕ.

2. Фронтсен, округсен тата армисен çар совечĕсен икĕ уйăх хушшинчи срокра пĕтĕм инженерно-технически состава 1-мĕш рангри воентехник званине илнисем таран пăхса тухмалла та вĕсене çак приказăн 1-мĕш пункчĕпе килĕшсе çĕнĕ çар званийĕсем памалла. Инженерно-технически состав çинчен, 3-мĕш рангри военинженертан пуçласа унтан аслисем çинчен, Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар вăйĕсен кадрсен Управленине 1942 çулти мартăн 1-мĕш тĕлне аттестаци материалне тăратмалла.

3. Фронтра çапăçакан Сывлăш-Çар вăйĕсен строевой чаçĕсенчи инженерно-технически состав валли çар званийĕсем илмелли выслуга срокне çакăн пек тăвас:

Техник-лейтенант — 8 уйăх
Старший техник-лейтенант—1 çул
Инженер-капитан —1 çул
Инженер-майор — 1 çул та 6 уйăх
Инженер-полковник — 2 çул.

Çар званийĕсене инженер-капитанран кĕçĕннисене фронтсемпе армисен çар совечĕсен памалла. Çар званийĕсене, инженер-капитанран пуçласа инженер-полковник таранах, Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар вăйĕсен Çар Совечĕн приказĕсем тăрăх памалла.

Фронтсемпе армисен çар совечĕсене çакăн пек право парас: вĕсем уйрăм чухне, ĕçре пит те паллă çитĕнÿсем тата палăрса тăракан ĕçсем тусан, çар званийĕсене старший техник-лейтенант таранах черетсĕр пама пултараççĕ тата черетсĕр çар званийĕсем инженер-капитанран пуçласа унтан аслисене те пама ыйтса ходатайство тăратма пултараççĕ.

4. Инженерно-технически состав валли тумтир формипе различи паллисене командăй составăннипе пĕр пек тăвас. Петлицăсем çинче Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар вăйĕсен инженерно-технически составĕ валли йышăннă эмблема пулмалла.

5. Сывлăш-Çар вăйĕсен летнăй е технически званисем илнĕ личнăй составĕ çанăсем çине йышăннă образецлă знаксем çĕлемелле тăвас.

Комсомолецсемпе пионерсем колхоза пулăшаççĕ

ИШЛЕИ. Ишек шкулĕнчи комсомолецсемпе пионерсем колхоза çитес çуракине лайăх хатĕрленме пулăшаççĕ. Вĕсем ку ыйтăва ятарласа пухура сÿтсе-явнă. Колхоза çуракине хатĕрленме пулăшас тĕлĕшпе уйăхлăх ирттерме йышăннă. Кун хыççăн 15 комсомолеца бригадăсем çумне çирĕплетрĕç.

Часах ĕçе те тытăнчĕç. Юлашки кунсенче комсомолецсемпе пионерсем Сталин ячĕпе тăракан колхоза 36 центнер кĕл, 14 центнер ытла кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса пачĕç. П. Алексеев комсомолец хăй пĕччен 20 центнер кĕл пухнă. М. Логинов пионер 2-мĕш бригадăн уйне 10 центнер тислĕк тухса тăкнă. И. Илюхин комсомолецпа Г. Овчинников пионер çак кунсенче 16 центнер кĕл, 14 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрĕç.

Бригадăсем çумне çирĕплетнĕ комсомолецсем çуракине кирлĕ ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене юсас тĕлĕшпе те ĕçлеççĕ.

Т. ВАСИЛЬЕВ.

Военнообязаннăйсемпе призывниксене учета илмелли тата вĕсем куçса çÿремелли çĕнĕ правилăсем

Военнообязаннăйсемпе призывниксене вăрçă вăхăтĕнче çар учетне илмелли тата вĕсем куçса çÿремелли çĕнĕ правилăсем йышăннă. Çав правилăсем тăрăх, военнообязаннăйсемпе призывниксен хăйсен районĕнчи (е хулинчи) военнăй комиссар ирĕк памасăр ялан пурăннă вырăнĕсенчен ниçта та тухса кайма юрамасть. Кайма ирĕк илес текенсен ун пирки военнăй комиссара заявлени çырса памалла. Заявленире ăçта, мĕн пирки каймаллине кăтартмалла тата заявленипе пĕрле военнăй билета памалла (военнăй билет пулмасан, ăçта пурăннине кăтартакан свидетельствăна памалла). Военнообязаннăйсен, призывниксен тата мобилизаци йĕркипе призыва тăрассинчен отсрочка илнисен (броньăпа юлнисен) пĕр-пĕр служба ĕçĕпе уйăха çити сроклăха командировкăна каймалла пулсан, вĕсем военнăй комиссартан ирĕк илмесĕрех кайма пултараççĕ. Военнообязаннăйсемпе призывниксен кун пек чухне командировкăна каймалли удостоверени тата унпа пĕрле мобилизаци йĕркипе призыва тăрассинчен отсрочка илни çинчен калакан удостоверени пулмалла. Командировка ĕçĕсемпех пĕр уйăх ытларах сроклăха каякан военнообязаннăйсемпе призывниксен тухса каймашкăн военнăй комиссартан ирĕк илмелле тата çав вăхăтрах учетран тухмалла.

Ытти йышши военнообязаннăйсен, командировкăсене кайнă чухне, тухса кайма пурин те пĕр пек йĕркепех ирĕк илмелле.

Çĕнĕ вырăна 10 кунран ытларах сроклăха куçса пынă военнообязаннăйсемпе призывниксен, çавăн пекех служба ĕçĕсемпе 1 уйăхран ытларах сроклăха командировкăна пынисен те, вырăна пырса çитнĕ хыççăн 48 сехетрен кая юлмасăр учета тăмалла.

Ялан пурăннă вырăнтан тухса кайса пĕр уйăх хушшинче нимĕнле çĕнĕ вырăнта та вырнаçман военнообязаннăйсемпе призывниксен хăйсем вăхăтлăха чарăнса тăнă вырăнти военнăй комиссариата пымалла, унта вĕсен çар обязанноçне тĕрĕслеççĕ тата военнăй билечĕ çине паллă тăваççĕ.

Çар учетĕнчен пăрăнакан военнообязаннăйсемпе призывниксене, çавăн пекех тата вĕсене пăрăнма пулăшакансене, РСФСР уголовнăй кодексĕн 193-мĕш статьин 10—А пункчĕ тăрăх тата ытти Союзлă республикăсен уголовнăй кодексĕсен тивĕçлĕ статьисем тăрăх ответ тыттараççĕ. Çар учетĕнчен, призывран тата мобилизациран пăрăнса юлакан çынсене военнăй трибуналăн судне параççĕ. (ТАСС).

Заводăн подсобнăй хуçалăхĕ

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче подсобнăй хуçалăха вăйлатни калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çакна шута илсе Канашри вагонсем юсакан завод çумĕнчи подсобнăй хуçалăха вăйлатсах пыраççĕ. Сăмахран, иртнĕ çулта çĕрулми 9 гектар çине лартнă пулсан, кăçал 15 гектар çине лартма палăртнă. Кунсăр пуçне кăçал купăста 4,5 гектар, хăяр 3 гектар, помидор 2,5 гектар, сухан 1,5 гектар тата ытти пахча-çимĕçсем 3,5 гектар лартма йышăннă.

Халĕ подсобнăй хуçалăх çитес çуракине хĕрсех хатĕрленет. Ялхуçалăх машинисене юсаççĕ, участок çине удобренисем кăлараççĕ.

Подсобнăй хуçалăха пултаруллă агроном-животновод Н. Т. Лещев юлташ ертсе пырать. Лещев юлташ подсобнăй хуçалăх валли специалистсем хатĕрлесе çитерні. Халĕ ирхи çимĕçсем çитĕнтерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Вăл ертсе пынипе иртнĕ кĕркунне 72 тăваткăл метрлă теплицăра сухан лартнă пулнă. Декабрĕн юлашки кунĕсем тĕлне сухан питех те аван ÿссе çитĕннĕ. Халĕ çав суханпа столовăйра тата хулари ытти апат-çимĕç предприятийĕсенче те усă кураççĕ.

Лещев юлташ хăйĕн ĕçне сарсах пырать. Халĕ вăл теплицăра иккĕмĕш хут сухан лартнă. Кунсăр пуçне теплицăра салат, редис питĕ лайăх çитĕнеççĕ. Хăяр, помидор тата ытти çимĕçсем те начар мар ÿсеççĕ. Лещев юлташ, çав çимĕçсене тухăçлăн пăхса ÿстерсе, апрель уйăхĕн пуçламĕшĕнчех вĕсене массăллăн сутма тытăнассишĕн кĕрешет.

Подсобнăй хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç те хисеплĕ вырăнта тăрать. Хуçалăхăн таварлă сысна фермиі пур. Унта 20 сысна, 17 лаша пур. Сыснисене лайăх пăхнă пирки, вĕсен виçи декабрь уйăхĕнче кăна 18-шар килограмм хутшăннă.

И. МАЛОВ.
И. КОРНИЛОВ.

Нимĕçсем пулнă ялсенче

(Фронтран килнĕ çырусенчен)

Германи çарĕ Совет Союзĕ çине вăрă-хурахла тапăнса кĕрсе, ытти çĕршывсенчи халăхсене чуралантарнă пекех, пирĕн ĕçсыннисене те çăмăллăнах чуралантарма шутланă. Вăхăтлăха тытса илнĕ ялсенче фашистсем юншăн антăхса хăйсен тискер ĕçĕсене тăваççĕ. Хĕрарăмсемпе ачасене, стариксене, чирли-сыввине пăхмасăр, халиччен этемлĕх курман тискерлĕхпе асаплантарса вĕлереççĕ.

Хуласемпе ялсенче тата халăх пурăнакан ытти вырăнсенче нимĕçсем ним айăпсăр ачаллă хĕрарăмсене пере-пере вĕлереççĕ. Смоленск облаçĕнчи пĕр ялта ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ фашистла варвăрсем ним айăпсăр 23 арçына персе пăрахнă. Хĕрарăмсемпе ачасенчен тумтирĕсемпе çимĕçлисене туртса илсе, çурчĕсене, мĕнпурĕ 44 хуçалăха, вут тĕртсе çунтарса янă. Нимĕнсĕр тăрса юлнă ял çыннисене пулăшакансене Германи законĕ тăрăх персе пăрахмалла текен приказ кăларса çапнă. Шадрино ялĕнче (Смоленск облаçĕ) тыткăна лекнĕ 5 красноармеец, хресченсен тумтирĕсене тăхăннăскерсем, выçă аптранипе хирти çĕрулмине кăларса ял айккинче вут чĕртсе пĕçерме тытăннă. Нимĕç салтакĕсем, красноармеецсене курсан, ним айăпсăрах иккĕшне персе пăрахнă, виççĕшне çакса вĕлернĕ, виллисене 3 кун хушши çакса тытма приказ парса хăварнă. Ж. ялĕнче вăтам шкул директорĕ патĕнче ухтару тунă хыççăн çур ещĕк махорка тупнă, çакăншăн директорпа арăмне, учительницăна, çакса вĕлерсе ĕнипе килти пурлăхĕсене хăйсемпе илсе кайнă. 17 çулти письмоносеца, ун патĕнче наган пур тесе, персе пăрахнă. Анчах ухтару хыççăн нимĕнле пăшал тавраш[illegible] те пулман. Нимĕçсен тискер ĕçĕсене каласа та пĕтерме çук.

Хĕрлĕ Çар хĕссе пынипе тăшман каялла чакать. Чакнă чухне те тăшман, хăйĕн çиллине шăнараймасăр, тискер ĕçсем туса хăварать. Çакăн çинчен пире нимĕçсене Хĕвеланăçнелле хăваласа пыракан Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем çырса пĕлтереççĕ.

«Большая Гребка ятлă яла нимĕçсенчен туртса илнĕ хыççăн пирĕн умма хăрушă картина тухса тăчĕ: ял вырăнĕнче кăмрăк купи çеç купаланса выртать. Хăйсем лекнĕ чухне нимĕçсем яла вут тивертсе хăварнă. Колхозниксен мĕнпур пек выльăх-чĕрлĕхне персе пăрахнă.

— Пĕтĕм халăха ялтан вăйпах çырма патне хăваласа кăларчĕç. Çур сехетрен пĕтĕм яла вут-хĕм çавăрса илчĕ. Пире ял çывăхне те ямарĕç,—тет колхозница Мария Панченко.

— Нумай выльăх-чĕрлĕхе пусса çирĕç. Хăйсем çинĕ чухне «Рус капут» тесе кулаççĕ, — каласа парать 52 çулти Раиса Павелчук.

Урамсенче çĕмрĕк танксемпе тупăсене, пулеметсене тата ытти боеприпассене курма пулать. Пĕр танк ăшĕнче продовольстви склачĕ пулнă пулмалла, кунта темиçешер килограмм сало, выльăх ăш çăвĕ, кусемпе пĕрлех алла çыхмалли темиçе сехет, сукно, пуфлисем т. ыт. те пур. Петровка ялне тăшман çунтарма ĕлкĕреймен. Анчах кунта та фашистсен тискер ĕçне курма тӳр килчĕ. Тыткăна лекнĕ красноармеецсене сарайне хупса хурса вут тĕртсе çунтарса янă. Çунса пĕтеймен хăмасем хушшинче боецсен çунса кайнă ӳчĕсем курăнса выртаççĕ. Ялти колхозниксем каласа панă тăрăх, çирĕмпилĕк красноармееца (вĕсем хушшинче аманнисем те пулнă) темиçе кун апат çитермесĕр асаплантарнă. Хĕрлĕ Çар çывхарса килнине пĕлсен, нимĕçсем сарая вут тĕртсе хăварнă,—тесе пĕлтерет красноармеец И. Храмов юлташ.

Калинино облаçĕнчи Димитриево ялĕнче нимĕçсем, ялти ватти-вĕттине шкул çуртне хăваласа пухса, вут тивертсе янă. Шкул чӳречинчен сикнĕ пĕр ватă çынна мерзавецсем винтовкăран персе вĕлернĕ. Пушкино ялĕнче те хресченсене сарайне хупса лартса пурне те çунтарса янă.

Тыткăна лекнĕ красноармеецсенчен, тулти шартлама сивве пăхмасăрах, урана тăхăнмалли япаласене туртса илеççĕ.

Вăрмар районĕнче çуралнă красноармеец Иван Трифонов хăй тыткăнран тарни çинчен çапла каласа парать: «Тыткăна лексен пире сарайне хупса лартса, урари çăматăсене хывса илчĕç. Пире çара уран тенĕ пек тăратса хăварчĕç. Эпĕ çав вăхăтрах часовойран тула тухмалли хушă çинчен ыйтрăм. Часовой тĕллесе кăтартнă вырăна çитсен, кăшт айккарах кайсанах вăрман ăшне чăмрăм. Çавăнтах пăшалтан икĕ хут пени илтĕнчĕ. Анчах эпĕ çаврăнса пăхмасăр малалла тартăм. Ик урана та тăм илсе ячĕ. Часах пĕр яла çитсе тухрăм. Кунта хамăраннисем пулнине пĕлсенех, санитарнăй часа кайса урана çыхтартăм».

Анчах совет çыннисем нимĕç бандичĕсене вĕсен мĕнпур тискер ĕçĕсемшĕн часах тавăрĕç. Тавăру кунĕ çывхарса килет.

Хĕрсем професси илеççĕ

— Вăрçă пырать, çавăнпа вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçлемелле. Тăван çĕршыва сыхлама кайнă юлташсен вырăнне тăмалла, — теççĕ пирĕн малта пыракан хĕрсем, чăн-чăн патриоткăсем. Вĕсене халь станок умĕнче те, трактор рулĕ патĕнче те, колхозра бригадир пулса ĕçленине те—пур çĕрте те курма пулать. Вăрçă кунĕсенче хĕрсем уйрăмăнах тăрăшса, ырми-канми ĕçлеççĕ.

Çакăн пек хĕрсем Улатăр районĕнче сахал мар. Чугунçул çинче токарь пулса ĕçлекен çамрăк комсомолкăна Г. Долговăна пурте пĕлеççĕ. Вăл вăрçă кунĕсенче ĕçлеме пуçларĕ. Часах токарь профессине вĕренсе алла илчĕ. Халĕ вăл ытти цехсем валли сложнăй детальсем туса парать, сменăри нормăна 180—200 процент тултарать.

Унăн юлташĕ 17 çулти комсомолка М. Лычалина вăрçăччен чернорабочи пулнă. Çав вăхăтра сверлильнăй станокăн ĕçĕпе интересленнĕ, ăна вĕренме тăрăшнă. Цех начальникĕ СССР Верховный Совет депутачĕ Моисеева юлташ Лычалинăна сверловщикăн профессине вĕренме пулăшнă. Халь Лычалина юлташ станокпа хăй тĕллĕнех ĕçлет, заказсем туса парать, сменăра икшер норма тултарать.

«Победа» колхозри Васянина Аннăпа «Красный луч» ялхуçалăх артелĕнчи Дроздова Раиса мĕн пĕчĕкренех çывăх юлташсем. Иккĕшĕ те вĕсем трактор ĕçне вĕренме кăмăл тунă. Вĕсем шухăшлани пурнăçланчĕ. Нумаях пулмасть иккĕшĕ те трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухрĕç, трактор рульне тытрĕç. Халь пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

— Ĕçре опытлă трактористсенчен пурĕпĕрех юлмастпăр, — теççĕ вĕсем.

Т. К.

Пĕр ачана та шкул тулашĕнче хăвармалла мар

ÇĔРПУ. (**Хамăр корреспондентран**). Хăшпĕр итогсем кăтартса панă тăрăх, кăçалхи вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш çурçулĕнче районри чылай шкулсем хăйсен задачисене чыслăн пурнăçласа пыни курăнать. Тепинкасси пуçламĕш шкулĕнчи (заведующийĕ Боярский юлташ) ачасем малтанхи çурçуллăхра 100 процентчĕпех вĕренӳре ĕлкĕрсе пынă. Кунта ачасем шкула пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ. Çур çул хушшинче вĕренме çӳреми е вĕренме пăрахнă ачасем пачах пулман.

Çакăн пекех Иккĕмĕш Çĕньялти тата Тимĕрçкассинчи пуçламĕш шкулсенче те ĕçсем начар мар. Çак шкулсенче те вĕренӳре ĕлкĕрсе пыман е шкул тулашне юлнă тата шкула çӳреме пăрахнă ачасем çук.

Çак хушăрах районри хăшпĕр шкулсем хăйсен ĕçĕсене халиччен те урăхлатса çĕнетмен. Чурачăк вăтам шкулĕ (директорĕ Кузнецов юлташ) кăçал иртнĕ çулсенчен те начартарах ĕçлет. Пĕрремĕш çурçуллăхра шкул çулне çитнĕ ачасенчен 1—4-мĕш классене 21 ачана, 5—7-мĕш классене 9 ачана вĕренĕве явăçтарман. Унсăр пуçне вĕренӳ çулĕ хĕрсе пынă вăхăтра 33 ача вĕренме пăрахнă. Кунта пĕрлех ачасем вĕренӳре те начар ĕлкĕрсе пыраççĕ.

Çакнашкал шкулсем районра татах та пур. Кăпаркассинчи (директорĕ Орлов), Анатри Кипекçери (Енрушов), Патăрьелĕнчи (Ельмаков) туллимар вăтам шкулсем, Хыркассинчи, Таканари пуçламĕш шкулсем т. ыт. те пĕрремĕш çурçуллăхра пачах çителĕксĕр ĕçленĕ.

Çапла вара, хăшпĕр шкулсем начар ĕçленине пула, пĕрремĕш çурçуллăхăн итогĕсем те начартарах. Çакна эпир шкул çулне çитнĕ ачасенчен 104 ачана вĕренĕве явăçтараманнинчен, 293 ача вĕренме пăрахнинчен тата ачасем вĕренӳре ĕлкĕрсе пырасси 83 процент çеç пулнинчен аван куратпăр.

Хăшпĕр шкулсем начар ĕçлени учительсем тата вырăнти советсен депутачĕсем ĕçлеме ӳркеннинчен килет. Чылай учительсем ачасен ашшĕ-амăшĕсем хушшинче ĕçлемеççĕ. Çавнашкалах хăшпĕр вырăнти советсем те шкул ыйтăвĕсемпе кирлĕ пек интересленмеççĕ.

Районри тивĕçлĕ организацисем шкулсем çине çителĕксĕр çаврăнса пăхни те ĕçре пысăк чăрмавсем кӳрет. Чылай шкулсенче вутă çук. Çакăн пирки занятисем йĕркеллĕ пулмаççĕ.

Кунта суту-илӳ организацийĕсем çинчен те каласа хăвармалла. Райпотребсоюз, горпо, сельпосем тата КОГИЗăн районри отделенийĕ шкулсем валли учебниксемпе вĕренӳ хатĕрĕсене çителĕклĕ таран кӳрсе килмеççĕ.

Совет шкулĕнче вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ пĕр-пĕринпе тачăн çыхăнса тăраççĕ. Ачасене коммунистла воспитани памалли темăсем кашни урокрах пулма пултараççĕ. Уроксене уйрăмăнах хальхи тапхăрпа çыхăнтарса пыма тăрăшмалла. Анчах та, калас пулать, хăшпĕр учительсем уроксене хальхи тапхăрпа çыхăнтарса пыма пĕлмеççĕ, ачасене тăван çĕршыва юратма, тăван çĕршыва чун-чĕререн парăнса унпăн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма хатĕр тăма вĕрентессине тивĕçлипе хакламаççĕ. Сăмахран, Старак вăтам шкулĕнчи учитель Соснин юлташ 9-мĕш класра географи урокĕпе Германи, Бельги, Итали тата ытти государствăсем çинчен каласнă чух хальхи тĕнче вăрçи çинчен пĕр сăмах та шарламан. Çавăн пекех Уйкассинчи туллимар вăтам шкулти учительница А. Иванова юлташ та 6-мĕш класра географи урокĕнче «Çĕр айĕнчи пуянлăхсем çинчен» каласнă чухне хальхи событисем çинчен пĕр сăмах та каламан. Çакăн пек вĕрентекен учительсем татах та пур.

Учительсен уроксене тĕплĕн шухăшласа çырнă плансемпе конспектсем тăрăх ирттермелле. Кашни урокрах хальхи событисемпе çыхăнтарма тăрăшмалла.

Учительсене методика енĕпе пулăшса пыма районри методикăллă пĕрлешӳсем тата предметлă комиссисем организациленĕ. Çĕрпӳри вăтам шкул çумĕнчи, Хĕрлĕ Тури тата Топнерти туллимар вăтам шкулсем çумĕнчи предметлă комиссисем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем канашлусенче учительсене пулăшас тĕлĕшпе кирлĕ ыйтусене сӳтсеявнă.

Анчах та ытти пĕрлешӳсемпе комиссисем кирлĕ пек ĕçлемеççĕ, канашлусем те ирттермеççĕ.

Шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕрентмелли правăна пирĕн тăван çĕршыв темиçе çул хушши кĕрешсе илнĕ. Пурне те вĕрентесси пирĕн тăван çĕршывра çирĕп закон пулса тăчĕ. Ку закон пурне те тивĕçлĕ, унпа пурин те усă курма тăрăшмалла.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренĕве явăçтарассишĕн уйрăмăнах тăрăшса ĕçлемелле.

ССР Союзĕн пулас гражданинĕ— Хĕрлĕ Çаршăн, промышленноçшăн, ялхуçалăхĕшĕн тата ытти отраслĕсемшĕн те лайăх хатĕрленсе çитнĕ, пурнăç ыйтăвĕсене тĕрĕс татса паракан çын пулма тивĕçлĕ. Çак задачăна пурнăçа кĕртес тесен, шкул çулне çитнĕ ачасенчен пĕрине те шкул тулашĕнче хăвармалла мар.

Учительсен, шкул ĕçĕсене вăрçă вăхăчĕ хушнă пек урăхлатса çитерсе, кăçалхи вĕренӳ çулĕн иккĕмĕш çурçуллăхне пысăк çитĕнӳсемпе вĕçлессишĕн çине тăрсах кĕрешмелле.

Г. ПЕТРОВ.

Йĕлтĕрçĕсен кросне хатĕрленетпĕр

КАНАШ. Профсоюз членĕсемпе комсомолецсен кросне ирттерме хатĕрленес ĕç районра хĕрӳллĕ пырать.

Январĕн 20-мĕш тĕлне районĕпе 14 вырăнта йĕлтĕр бази организациленĕ. Çав базăсенче 1000 мăшăра яхăн йĕлтĕр пур. Йĕлтĕрçĕсен сывлăхне тĕрĕслес тĕлĕшпе 13 медицина пункчĕ ĕçлет. Халĕ тĕрĕслӳре 900 çын пулнă.

Кроса хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕ местком председателĕсене, учрежденисен руководителĕсене тата партин пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсене пухса канашлу ирттернĕ. Çавăн хыççăн нумай çĕрте хатĕрленӳ ĕçĕ вăйланчĕ. Уйрăмăнах ку ĕçе педучилищĕре аван йĕркеленĕ. Унта учительсем те, студентсем те активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсен хăйсен 90 мăшăр йĕлтĕр пур. Нумаях пулмасть йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне туса ирттертĕç.

Хатĕрленӳ ĕçĕ Сикасси вăтам шкулĕнче тата пир-авăр фабрикинче те начар мар пырать.

Анчах хăшпĕр предприятисемпе учрежденисенче кроса хатĕрленсе ирттерессине кирлĕ пек хакламаççĕ. Хатĕрленӳ ĕçĕ чугунçул çинче ĕçлекенсемпе ВРЗ-ри рабочисем хушшинче начар пырать.

А. ДАНИЛОВ.

Çĕршывăн финансĕсене куллен ӳстерсе пырассишĕн

Сталин юлташăн Октябрь уявĕ кунĕсенче тунă историллĕ доклачĕ пирĕн çĕршыври нумай миллионлă халăха Германи фашисчĕсене хирĕç кĕрешме пĕтĕçтерсе мобилизацилерĕ. Предприятисенчи рабочисемпе работницăсем оборона заказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе вăя шеллемесĕр, кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме тытăнчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем государство умĕнчи тырă, аш-какай, сĕт-çу обязательствисене срокчен тӳлесе татма тăрăшаççĕ. Государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене тӳлеççĕ. Пĕтĕм совет халăхĕ пĕр çын пек, пĕр ĕмĕтпе—фронта мĕн кирлине пурне те вăхăтра тата ытларах парса тăрас шухăш-кăмăлпа пурăнать.

Чăваш республикинчи çĕршер колхозсем, ялсоветсем укçа-тенкĕ планне срокчен тултарса пыраççĕ. Сăмахран, Елчĕк, Вăрмар, Куславкка, Тăвай, Советски районсем, Шупашкар, Çĕмĕрле, Улатăр хулисем 1941 çулти тăваттămĕш кварталта укçа-тенкĕ пухас плана ытлашшипех тултарчĕç. Канаш районĕ 1942 çулти пĕрремĕш кварталти плана январĕн 20-мĕш тĕлне 35,3 процент тултарнă. Çавăн пекех укçа-тенкĕ пухас ĕç ытти чылай районсенче те ăнăçлăн пулса пырать. Республикăри ĕçсыннисем фашистсен тискер кăйăкла ĕçĕсем çине государство умĕнчи укçа-тенкĕ обязательствине пĕтĕмĕшпех срокчен тӳлесе татнипе ответлеççĕ. Вăрмар, Элĕк, Советски, Елчĕк районĕсем заем укçине пĕтĕмĕшпех тӳлесе татнă. Çапла вара вĕсем оборона вăйхăватне çирĕплетме темиçе çĕршер пин тенкĕ укçа парса пулăшрĕç.

Правительство укçа-тенкĕпе япала лотерейине ирттерме йышăннă решение Чăваш республикинчи ĕçсыннисем пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕç. Лотерея билечĕсене кĕске срокрах 5861 пин тенкĕлĕх çырăнса илчĕç. Вăрмар, Хĕрлĕ Чутай тата ытти районсенчи ĕçсыннисем лотерея билечĕсене çырăннă чухнех укçине пĕтĕмпех тӳлесе татрĕç.

Оборонăн халăх фондне тăвас ĕçре те совет ĕçсыннисем хăйсен патриотизмне кăтартрĕç. Оборона фондне укçа-тенкĕ пухас ĕç анлăн сарăлса кайрĕ. Январĕн 1-мĕш тĕлне пирĕн республикăри ĕçсыннисем çĕршыв оборонин фондне 11260 пин тенкĕ панă, вăл шутран 5689 пин тенкĕ укçан, 5570 пин тенкĕ заем облигацийĕсем хывнă. Анчах эпир халĕ укçа-тенкĕ пухас ĕçе вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек кирлĕ вырăна лартайман-ха. Пирĕн республикăра финанс планне срокра тултарса пырайман ялсоветсемпе колхозсем те чылай тĕл пулаççĕ-ха.

Шупашкар, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри, Йĕпреç, Кувакино районĕсем финанс планне тултарас тĕлĕшпе сӳрĕккĕн ĕçлесе пыраççĕ. Вĕсем 1942 çулти пĕрремĕш кварталти финанс планне тултарас ĕçре кая юлса пыраççĕ. Ку районсенчи руководительсем укçа-тенкĕ планне тултарас ĕç çине çителĕклĕ çаврăнса пăхмаççĕ. Колхозниксем хушшинче массăллă агитаци ĕçне япăх туса пыраççĕ, активсемпе ĕçе йĕркелемен.

Массăллă-политикăллă ĕçе лайăх организациленĕ, активсемпе куллен ĕçлесе пынă районсенче укçа-тенкĕ планне тултарас ĕç малта пырать. Обязательнăй налогсене тӳлесе татманнисем отечественнăй вăрçă условийĕсенче пулмалла мар. Апла пулин те, хăшпĕр районсенче недоимкăсем пур-ха. 1942 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне Шупашкарпа Сĕнтĕрвăрри районĕсенче темиçешер пин тенкĕ недоимка пулнă. Кăçалхи çул укçа-тенкĕ обязательствине пурнăçлас тĕлĕшпе çавнашкал кая юлса пыракан пĕр район та, пĕр колхоз та, пĕр çын та пулмалла мар.

СССР Верховный Совет Президиумĕ 1941 çулти декабрĕн 29-мĕшĕнче вăрçă вăхăтĕнчи налог çинчен кăларнă Указ çĕршывăн оборона вăй-хăватне çирĕплетес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ку налог укçи пĕтĕмпех Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн вăй-хăватне çирĕплетес ĕçе каять. Çавна шута илсе, пирĕн республикăри ĕçсыннисем Указ тухсан[illegible], извещенине алла иличченех, вăрçă вăхăтĕнчи налога аванс шучĕпе тӳлеме тытăнчĕç. Çак ĕçе малалла та анлăн сарса пырса, налога срокчен тӳлесе татма тăрăшмалла.

Кунсăр пуçне ялсоветсен самообложени укçине пухас ĕçе те манса хăвармалла мар. Мĕншĕн тесен самообложени укçин 75 процентĕ вырăнти бюджета юлать, вăл вĕренӳ ĕçне, шкулсене тытса тăма тата хуçалăхри ытти ĕçсене тума каять.

Июлĕн 3-мĕшĕнче Сталин юлташ пĕтĕм ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетме чĕнсе калани предприятисен, учрежденисен руководителĕсене, кашни колхоз председательне производство планне тултарма кăна мар, чылай ирттерсе тултарма хушать. Пур пек ресурссемпе мĕн май килнĕ таранах усă курмалла. Укçа-тенкĕне перекетлес тĕлĕшпе финанс тата бюджет дисциплинине çирĕппĕн пăхăнса ĕçлемелле.

Финанс дисциплинине пăсакансене, социализмлă пурлăха, государство средствине çаратакансене хирĕç пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешмелле. Предприяти руководителĕсен учетпа отчет ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла. Хуçалăхра йĕркелĕх туса, укçа-тенкĕ, хаклă материалсене расходлас ĕçре çирĕп контроль организацилемелле. Хăшпĕр учрежденисемпе предприятисенче учетпа отчет ĕçне япăхтарса янă, çавăнпа та государство укçи-тенкине вырăнсăр салатнисем пулаççĕ. Сăмахран, Наркомздрав системинче ĕçлекен учрежденисенче çавнашкал япăх ĕçсем палăраççĕ. Шупашкарти санитарнăй станцире ĕçлекен бухгалтер Максимов юлташ суя документсем туса, кассăран темиçе пин тенкĕ укçа çаратнă. Ача çуратакан çуртри кассир, руководительсем енчен контроль çуккипе усă курса, государство укçи-тенкине чылай салатнă. Çавăн пекех Шупашкар хулин коммунальнăй хуçалăх отделĕнче те отчетпа учет ĕçне çирĕплетессишĕн тăрăшмаççĕ.

Кунсăр пуçне хăшпĕр предприятисенчи руководительсем аппаратра планпа пăхнинчен ытлашши работниксем тытса штат дисциплинине пăсаççĕ. Сăмахран, древпромсоюз, мунча, Чăвашпотребсоюз организацийĕсем, хальхи вăхăта шута илмесĕр, планпа пăхнинчен ытлашши работниксем тытса усраççĕ.

Предприятисенче материалсене перекетлĕн тыткаласа, туса кăларакан продукцин хăйне лараслан хакне чакарма пур майсемпе те усă курса, тискер тăшмана çапса çĕмĕрме Хĕрлĕ Çара ытларах пулăшассишĕн тăрăшмалла.

1942 çулти пĕрремĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарас тесе пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле. Ку ĕçре уйрăмăнах финанс работникĕсем хăйсен пуçарулăхĕпе хастарлăхне кăтартса ĕçлемелле. Парти, совет органĕсем пулăшнипе, ялти активпа таччăн çыхăнса, çĕршывăн финансĕсене куллен ӳстерсе пырассишĕн тăрăшмалла.

В. ТАВРИН.

ЧАССР Финанс халăх комиссарĕн заместителĕ.

Хаяр вăхăт

Совет çыннисем, хăйсен тăван пулине тăшманран сыхласа, Мускав патĕнче харпăрхăй пурнăçне хĕрхенмесĕр çапăçрĕç. Боецсем вăл кунсенче хăйсем çинчен шухăшлама та манса кайрĕç, мĕншĕн тесен хаяр вăхăт условийĕсем çапла тума хушнă. Вĕсем хаяр та йывăр кунсене чăтса ирттерчĕ. Мускава çапăçри пысăк хăрушлăх хăратса тăнă вăхăтра, хула çывăхĕнче çапăçакан кашни воинăн уйрăмăнах çирĕп чĕреллĕ пулса, пур йывăрлăхсене те паттăррăн та мухтавлăн чăтса ирттерме тĕлли кирлĕ пулнă. Вĕсем чи харсăр боецсем чаплă вилĕмпе вилнине курнă, анчах вĕсен чĕринче хуйхă мар, тăшмана çĕнтерес ĕмĕт вĕресе тăнă. Хаяр вăхăт çухатусемсĕр иртмест,—вĕсем çакна питĕ лайăх пĕлсе тăнă.

Мускава сыхланă паттăрсене халăх нихçан та манас çук. Тăван çĕршыва, тăван халăха чун-чĕререн юратнă пирки тăшмана хирĕç вĕсем истори нихăçан курман харсăрлăхпа çапăçнă. Тăван çĕр, ирĕклĕх, Мускав хăрушлăх умĕнче тăнă. Вĕсем пĕртен-пĕр шухăшпа пурăннă: тăшмана хула çывăхне ямалла мар, мĕншĕн тесен Мускав—вырăс халăхĕн пиншер çул хушшинчи духовнăй культурине сыхласа усракан хула; вăл авалта пыракан мĕнпур прогрессивлă этемлĕхшĕн çывăх та хаклă. Çавăнпа та Мускавшăн пыракан çапăçусенче совет воинĕсем хăйсен пурнăçĕсене хĕрхенмесĕр, историре нихăçан пулман харсăрлăхпа кĕрешрĕç.

Тăшмана хирĕç çапăçса пуçĕсене хунă паттăрсен ячĕсене халăх нихăçан та манас çук. Вĕсен чĕри тăшман танкĕсентен те çирĕпрех, тăшман вутĕмчен те хĕрӳрех пулнă. Вĕсем тăшмана хирĕç мĕнтери паттăррăн та харсăррăн кĕрешнине çак тĕслĕх питĕ лайăх кăтартса парать. Панфилов генерал ячĕпе тăракан дивизин 28 гвардеецĕ çине нимĕçсен 50 танкĕ пырса тапăннă. Чаплă гвардеецсем тăшманран хăраса чĕтресе ӳкмен, вĕсем хăйсен аллинчи рубежа юлашки юн тумламĕ юлмиччен, вилĕм сехечĕ çитсе çапиччен сыхласа тăнă. Çапăçура вĕсем пурте чаплă вилĕмпе вилнĕ, çапах та тăшмана Мускав патне яман.

Кунсем иртĕç, çулсем иртĕç, анчах та паттăр красноармеец Сосновскийн ятне халăх нихăçан та манса каймĕ. Халĕ эпир Иван Сусанинăн ятне мĕнтери ăшшăн та хисеплĕн асăнатпăр. Сосновский юлташăн ятне те çавăн пекех ăшшăн та хисеплĕн асăнĕç. Сосновскийн ячĕ нихăçан та манăçа тухмĕ, мĕншĕн тесен вăл тунă ĕç—тăван çĕршыва юратнин чи пысăк тĕслĕхĕ.

Мускав патĕнчи пĕр хаяр çапăçура пирĕн часть тăшмана хирĕç контратака пуçласа янă. Нимĕçсем çак вăхăтра красноармеецсем çине флангсенчен питĕ вăйлă пеме тытăннă. Калама çук паттăрла ĕç тунипе кăна çав инкеке сирсе яма май пулнă. Çавăн пек паттăр ĕç тума красноармеец Сосновский килĕшнĕ. Вăл мала тухнă та нимĕçсен ДЗОТ-чĕ патнелле хырăмпа шуса кайнă. Унăн юлташĕсем ĕç мĕнпе пĕтессине сывлăма чарăнсах кĕтсе тăнă. Сосновский ДЗОТ-ăн амбразури патне йăпшăнса çитсе ăна хăйĕн кĕлеткипе хуплаcа хунă. Унтан вăл икĕ аллипе те пулемет кĕпçинчен ярса тытнă та, ăна пĕтĕм вăйпала çĕрелле пусса лапчăтса лартнă. Нимĕç пулеметчикĕ тепĕр черет пуля кăларса яма çеç ĕлкĕрнĕ. Харсăр Сосновскийн кăкăрĕ витĕр пульăсем шăхăрса тухса кайнă. Анчах пулемет хăй те чыхланса ларнă, мĕншĕн тесен Сосновскийн кĕлетки амбразурăна питĕрсе хунă та лайăх пăхса тĕллесе пеме май паман. Пирĕн боецсем, Сосновскийн мухтавлă ĕçĕпе хавхаланнăскерсем, çак самантпа усă курса, пурте пĕр харăс çĕкленнĕ те тăшман çине ыткăнса кĕрсе кайнă. Вĕсем нимĕçсен хирĕç тăмалли тĕввине пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Тăшман каялла чакнă. Пирĕн войскăсем каçхине тăшмана çак участокра татăклăнах çĕнтернĕ.

Нумайранпа кĕтсе тăракан сехет—тăшмана аркатса тăкас сехет çитĕ. Ун чухне вара Сосновский красноармеецăн таса юнĕ тумлам-тумламăн пĕр çĕре пухăнĕ те тăван Мускавшăн хăйĕн пĕтĕм пурнăçне—çамрăклăхне, шанчăклăхне, ĕмĕтне, юратуне, хĕрӳллĕ чĕрине панă этемĕн сăн-сăпатне нихăçан иксĕлми хĕвел пек çутатса парĕ.

Хальхи хаяр вăхăтра эпир кашни этеме, унăн çирĕплĕхне, харсăрлăхне, чысĕпе тивĕçлĕхне, çĕршыва юратнине, йывăрлăхĕсемпе хурлăхсем тӳссе ирттерес пултарулăхне, пĕр сăмахпа каласан, унăн политикăллă тата моральлĕ сăн-сăпатне тĕрĕслетпĕр. Мускав патĕнче çапăçнă çынсене йывăр пулнă. Вĕсем юнпала çухатусен çулĕпе пынă, анчах та тăшмана çĕнтерес шухăшĕ вĕсен хурçă пек çирĕп пулнă.

Эпир Крюково поселокĕшĕн пынă çапăçăвăн пĕр эпизодне астăватпăр. Ку эпизод Мускав патĕнчи çĕршĕн çапăçнă совет çыннисен моральлĕ сăн-сăпатне, вĕсен харсăрлăхĕпе паттăрлăхне лайăх палăртса парать. Пирĕн красноармеецсем, старший лейтенант Верхов ертсе пынипе, поселока çĕмĕрсе кĕнĕ те пĕр чул çурта йышăнса, унта çирĕпленсе ларнă. Урам хушшинчи çапăçу пуçланса кайнă. Нимĕçсем, танксемпе пехотăна илсе килсе, çак çурта пур енчен те хупăрласа илнĕ. Верхов юлташ подразделенийĕнчи красноармеецсем икĕ кун хушши осадăра ларнă. Вĕсене парăнмашкăн ӳкĕтлеме пикеннĕ. Анчах та парăнăр тесе вырăсла пĕлми-пĕлми лĕкĕртетекен ефрейторĕн куншăн хăйсен пурнăçне парса саплама лекнĕ.

Нимĕçсем çапах красноармеецсене чĕреллех тыткăна илесшĕн пулнă. Чул çурт умне вĕсем минометсем, пулеметсем, орудисем лартса тултарнă. Вĕсем кунĕн-çĕрĕн çурт çине персе тăнă, иккĕмĕш этажа аркатма пуçланă. Анчах красноармеецсенчен нихăшĕ те хăраса ӳкмен. Верхов хăйĕн юлташĕсене хавхалантарнă, вĕсен чĕринче мĕнле шухăш пуррине курас тенĕ пек, кашнинех куçĕнчен тинкерсе пăхнă. Верхов хăй тахçанах аманнă пулнă. Хăйĕн суранне вăл иртенпех красноармеецсенчен пытарса тăнă. Командир аманнине пĕлсен, боецсем ăна чи ăшă кăмăлпа çавăрса илнĕ, хавхалантарма тытăннă, хӳтĕрех вырăна вырнаçтарасшăн пулнă. Анчах вăл çак йывăр самантра хăйне валли канлĕх шыраман, красноармеецсем мĕн тӳсеççĕ, çавнах тӳссе ирттернĕ. Сухарипе флягăсенчи шыва расходлас тĕлĕшпе вăл чи çирĕп режим тунă. Чул çурт хумине тата тепĕр снаряд шăтарса кĕнĕ. Ванчăксем лекнипе татах виçĕ красноармеец аманнă. Вĕсене подвала илсе анса суранĕсене çыхнă. Нимĕçсем татах та хытăрах пеме тытăннă, çапах та пирĕн боецсем пурĕ-пĕр çухалса кайман, вĕсем татах та хаяртараххăн çапăçма хатĕрленсе тăнă. Верхов, суранĕ çавтери ыратнине пăхмасăрах, чӳрече патне шуса пынă та урамалла кармашса пăхса унта тăшманăн миçе танк, пулемет тата мĕн чухлĕ пехота тăнине шутласа кăларнă. «Эпир хăраса тăрас çук. Вăйсем тан мар пулин те, çапăçмашкăн хатĕрех»,— тенĕ вăл юлташĕсене.

Тăшман çуртăн мĕнпур алăкĕсене йышăннă. Çурт стенине снаряд лексе шăтарнă вырăнтан аслăлатса, боецсем çĕрле çав шăтăк витĕр тухса тарма шутланă. Кăна тăшман сисиччен тумалла пулнă. Вĕсем пĕр-пĕринчен юлмалла мар, аманнă юлташĕсемпе хĕçпăшал тавраш[illegible] пăрахса хăвармалла мар тесе тупа тунă. Сасартăк нимĕç автоматчикĕсен пĕр ушкăнĕ çуртăн маччи çине кĕпĕрленсе кĕрсе кайнă. Чи ответлă самант килсе тухнă, боецсенчен тахăшĕ хăраса ӳкни сисĕннĕ. Çакна сиссен, яланах шарламасăр çӳрекен красноармеец Лихачев кăштах кулса илнĕ те «Интернационал» юрласа янă. Çак аслă гимн нихăçан та çакăн чухнехи пек вăйлăн янраман тейĕн.

Каçхине Верхов хăйĕн суранне тепĕр хут юсаса çыхнă та юлашки сухарине юлташĕсене валеçсе панă. Шыв тахçанах пĕтнĕ ĕнтĕ. Тулалла çĕмĕрсе тухма вăхăт. Боецсем пӳрт стенине взрыв туса сирпĕнтерсе янă. Нимĕçсем йĕркесĕррĕн пăтраşма пуçланă. Çак самантпа усă курса, пирĕн боецсем вĕсем çине пулеметсемпе автоматсенчен çил-тăвăллă, вут-хĕмлĕ çăмăр çутарма тытăннă. Çĕрĕпех пынă çак хаяр çапăçу. Верхов красноармеецсене осадăран илсе тухнă та тăшмана тылран пырса çапнă. Ирхине вара Крюково поселокне пирĕн чаçсем йышăнса илсе, ăна пĕтĕмĕшпех тăшманран тасатнă.

Çав йывăр кунсенче çапăçăвăн малти линийĕнчи çынсен чаплă ĕçĕсем Мускавра пурăнакан çынсене мухтавлă ĕç тума хавхалантарнă. Мускавра пурăнакан çынсем те вăл кунсенче хаяр вăхăт тĕрĕслевĕ витĕр тухрĕç. Кунсемçĕрсем зенитнăй орудисен кĕрлевĕнче ирттерчĕç, лăпкăн пурăнма пачах та май çукчĕ. Çапах та пирĕн çынсем, тăшман Мускав çине киле-киле тапăннине пăхмасăрах, ырма-канма пĕлмесĕр ĕçлетчĕç, хĕç-пăшалсем пухатчĕç, концертсем паратчĕç, столицăн пурнăç тапăшне пăсмасăр тытса пыратчĕç. Çав кунсенче никам та пуçа усман, мĕншĕн тесен кашниех çакна пĕлсе тăнă: лере, Мускав патне пымалли вырăнсенче, татах та йывăртарах. Мускав çыннисем баррикадăсем тума тухатчĕç, урам хушшисенче çапăçма хатĕрленетчĕç. Вĕсем Мускавшăн пыракан кашни çапăçу, çак калама та çук пысăк вăрçăри кашни ултăну мĕнле пулнине тĕплĕн сăнаса пыратчĕç. Сосновский юлташăн мухтавлă ĕçĕ Мускав çыннисен чĕрисене татах та пысăкрах шанчăк кӳртрĕ: Мускав хулине Сосновский пек чаплă паттăрсем сыхласа тăраççĕ пулсан, тăшман ăна нимпе те илеймĕ. Верхов боецĕсен çирĕплĕхĕ, харсăрлăхĕ Мускав çыннисене тĕлĕнмелле мăнаçлăхпа хавхалантарчĕ: тăван çĕршывăн чăнчăн ывăлĕсем тăшмана хирĕç çавăн пек çапăçмалла та ĕнтĕ!

Çакăн пек çынсем тăшманран сыхланă ĕнтĕ пирĕн столицăна Мускава. Вĕсем—халăхăн чи шанчăклă ывăлĕ-хĕрĕсем. Вĕсем хаяр кунсенчи чи хăрушă самантсенче те шанчăка çухатса халран кайса ларман, хăйсен çирĕплĕхне чакарман. Çавăнпа тăшман икĕ хутчен хаяр наступленисем туса та Мускава илме пултараймарĕ, мĕншĕн тесен Мускав алăкĕсене совет çыннисем хураллаcа тăнă. Вĕсен ĕмĕчĕ пĕртенпĕрех пулнă: е вилĕм, е çĕнтерӳ. Çак ĕмĕтпе вĕсем тăшмана çĕнтерчĕç.

О. КУРГАНОВ.

(**«Правда», январĕн 27-мĕш**).

„Марс“ колхозра

1941 çулта Сăръелĕнчи «Марс» колхоз вăйлă тырпул туса илчĕ. Кăçал колхозниксене кашни ĕçкунĕ çине 5-шер килограмм тĕштырă валеçсе параççĕ. Кунти колхозниксен кăçал хăйсене çителĕклĕ çеç мар, сутмалăх та тырă пур. Кăçал вĕсем кашни гектартан вăтам шутпа 17—18-шар центнер тĕштырă туса илчĕç. Анăçлă пулнă тырра: ыраша—6 кун хушшинче, çуртыррисене—10 кун хушшинче тăккаламасăр пуçтарса кĕчĕç. 1940 çулта колхозăн йышлă выльăх-чĕрлĕхлĕ фермисем 18 пин тенкĕ тупăш пачĕç пулсан, 1941 çулта вĕсенчен колхоз 34.045 тенкĕлĕх тупăш илчĕ.

Большевиксен партийĕпе совет правительстви ертсе пынипе социализмлă ялхуçалăх çулран çул вăйлăн аталанса пырать. Çук! Парас çук «Марс» колхозăн членĕсем хăйсен ирĕкне ирсĕр тăшмана. Нимĕç фашисчĕсем вилĕм тупĕç пирĕн çĕр çинче.

«Марс» колхозăн членĕсем отечественнăй вăрçă пуçланнă хыççăн хăйсен пĕтĕм ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетрĕç. Хăйсен пĕтĕм ĕçне фронт интересĕсемшĕн туса пыма пуçларĕç. Вĕсем государство умĕнчи 1941 çулти обязательствăсене пурне те хăвăрт пурнăçларĕç. Совет халăхĕн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн паттăррăн çапăçакан Хĕрлĕ Çара пулăшса, колхозниксем оборона фондне 17 сурăх, 20 хур, 32 чăх, 1000 тенкĕ ытла укçа, 4 пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсем, 600 ĕçкунĕ пачĕç, Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсене—24 мăшăр çăматă, 57 мăшăр перчаткăсемпе алшишсем, 23 мăшăр носки, 2 фуфайка, 32 çĕлĕк, 60 тир, 40 килограмм çăм пухса пачĕç. «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 2100 тенкĕ пачĕç тата укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене 3.480 тенкĕлĕх сыпăнса илсе, укçине те çийĕнчех тӳлесе татрĕç.

Колхозниксем хăйсен ытлашши тыррине государствăна сутма тытăнчĕç. Кĕске вăхăтрах государствăна вĕсем 60 центнер тĕштырă сутрĕç. Колхоз хăйĕн обществăллă фондĕнчен государствăна 120 центнер тырă сутрĕ.

Партин колхозри пуçламĕш организацийĕ колхозăн пĕтĕм ĕçне йĕркелесе ертсе пырать. Колхоз председателĕ А. Гаязов юлташ колхоза мĕн организацилеиĕренпех ертсе пырать. Пултаруллă коммунист колхоз пурлăхне ӳстерессишĕн, колхоз хуçалăхне тĕреклетессишĕн хăйĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет. Партипе комсомол организацийĕсем тавра колхозăн чи лайăх ĕçлекен активĕ пĕтĕçсе тăрать. Активпа вĕсем ĕçлеме пĕлеççĕ, ăна вĕрентеççĕ, ĕçре çитĕнтереççĕ.

«Марс» колхоз кăçалхи çуракине хатĕрленме большевикла хастарлăхпа тытăнчĕ. 1942 çул пуçламĕшĕ тĕлне колхозниксем уя 1500 тонна тислĕк, 130 тонна хура тăпра кăларчĕç, 51 центнер кĕл, 24 центнер чăх-чĕп тислĕкĕ пухса хатĕрлерĕç. 230 гектар çинче юр тытнă, вĕсенчен 20 гектар çине юра щитсемпе тытса хăварнă. 320 центнер çуртри вăрлăхĕ сортласа хунă, 9 сеялка, 6 культиватор, 20 плуг, 40 сӳре юсанă.

Колхоз, выльăх-чĕрлĕх ерчетес тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем туса, иртнĕ çул Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма тивĕçлĕх илчĕ. Вĕсем тырпул мастерĕсем пулса тăчĕç. Ĕлĕкхи выçлăхлă, хурлăхлă пурнăçран колхозниксем яланлăхах уйăрăлчĕç. Пуян та культурăллă пурнăçпа пурăнма тытăнчĕç. Çак икĕ çул хушшинче 45 колхозник çĕнĕ пысăк суртсем туса лартрĕç. Колхоз хăйĕн правленийĕ валли пысăк çуртсем туса лартрĕ.

Çак вунă çул хушшинче «Марс» колхоз палламалла мар улшăнчĕ. Вăл çĕршыв оборонин çирĕп крепоçĕ пулса тăчĕ. Вăл крепость—Хĕрлĕ Çар вăйĕ, çĕршывăн тĕреклĕхĕ. Çав вăй тăшмана тĕп тăвать, мĕншĕн тесен вăл ирĕклĕ, телейлĕ пурнăçпа пурăнакан совет халăхĕн вăйĕ.

Елчĕк ф.

И. ПЕТРОВ.

Çуракине хатĕрленме начар пулăшаççĕ

ШАХАСАН. Кăçал пирĕн район çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе кайра пырать. Анчах та çак çитменлĕхе пĕтерессишĕн комсомол организацийĕсем сахал тăрăшаççĕ. Сăмахран, Улаксарти Сталин ячĕпе тăракан колхозра çамрăксем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Комсомол организацийĕ (секретарĕ Еремеев) колхозри ĕçе ертсе пымасть. Вĕсем: «çитес кунсенче çуракине хатĕрленме тытăнаттăр-ха, ку тĕлĕшпе ĕçе тытăнмаллах», тесе кăна ответлеççĕ.

Ушанарти Калинин ячĕпе тăракан колхозра та çуракине хатĕрленес ĕç анăçлах пулса пымасть. Унти организацире 18 комсомолец. Вĕсенчен чылайĕшĕсем колхозра пачах та ĕçлемеççĕ. Колхоз уя юр тытса хăварас, вырăнти удобренисене пухас тата вăрлăхсене сортлас тĕлĕшпе юлса пырать. Анчах комсомол организацийĕ (секретарĕ Васильев) çуракине хатĕрленес ĕçре колхоза çителĕксĕр пулăшать. Çавăн пекех çуракине хатĕрленес ĕç Матьшу, Туçи Çармăс, Троицк, Шуркасси ялсоветĕсенчи колхозсенче те япăх пырать. Кунти комсомол организацийĕсем колхозсене сахал пулăшаççĕ, çитменлĕхсене пĕтерессишĕн кĕрешмеççĕ. Вăрман Кипекри Куйбышев ячĕпе тăракан, Ойкас Кипекри Тельман ячĕпе тăракан колхоз авăн çапса пĕтермен. Анчах та кунта ĕçе комсомолецсем хăйсем те тухмаççĕ. Ямаш ялсоветĕнчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз 33 гектар çинчен кĕлте кӳрсе пĕтермен, 130 гектар çинчи тырпула çапман. «Париж Коммуни» колхоз та авăн çапса пĕтермен, государство умĕнчи обязательствăсене халĕ те татман. Комсомол организацийĕсем ку тĕлĕшпе çав колхозсенче нимĕн те туман. Комсомолецсем хушшинчи дисциплина япăх. ВЛКСМ членĕсенчен çурри ытла пухусене çӳремеççĕ.

Уйрăм организацисенче союзра тăман çамрăксемпе çителĕклĕ таран ĕçлемен тата вĕсене ертсе, пример кăтартса паман пирки районра комсомолецсен йышĕ начар ӳсет. 1940 çулта комсомол ретне 400 çынна яхăн илнĕ пулсан, 1941 çулта мĕнпурĕ те 182 çынна кăна илнĕ, вăл шутран хĕрачасем 60 çын шутланаççĕ. Комсомолăн 45 организацийĕнче 1941 çулта пĕр член та хутшăнман.

Комсомолăн районри организацийĕсенче учет ĕçĕ япăхнă. Хăшпĕр организацисенче комсомолецсем ăçта кайнине те пĕлмеççĕ. Çавăн пекех комсомол докумечĕсене çухатаççĕ. Комсомолăн Матьшури организацийĕнче (секретарĕ Григорьев) пĕр анкета, Туçи Чуракассинчи организацире (секретарĕ Иванова) пĕр анкета, Вăтакас Кипечри организацире 2 анкета çухатнă. Кун пек тĕслĕхсем татах та тупăнаççĕ.

Районри шкулсенче те комсомол йышне ӳстерес тĕлĕшпе ĕçсем япăх пыраççĕ. Шăхасанти, Шуркассинчи вăтам шкулсенче иртнĕ çулта пĕр çынна та члена илмен.

В. ЯКОВЛЕВ.

Колхозниксене тухăçлă ĕçленĕшĕн хушса тӳлеççĕ

ИШЛЕЙ. Колхозсенче авăнсем çапса пĕтернĕ май халь пулăшсем валеçме пуçларĕç. Тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерес плана иртерсе тултарнăшăн колхозниксене хушса тӳлеççĕ. Çавнашкал районра: 13 колхозра—сыснасем ĕрчетес, 43 колхозра—сурăхсем ĕрчетес тата 25 колхозра сĕт суса илес плансене иртерсе тултарнăшăн хушса тӳлеççĕ.

«Социализм» колхозăн фермине ĕçлекен Туймакова доярка хăйĕн тухăçлă ĕçĕшĕн 75 литр сĕт илет. Мочалов конюх тихасем пăхса ӳстерес плана иртерсе тултарнăшăн укçан 120 тенкĕ илчĕ.

Пархикасси колхозĕнче Мария Степанова, Клавдия Ермолаева, У. Мочалова колхозницăсем выльăх кăшманĕ гектартан 140 центнер илес вырăнне 168 центнер илнĕшĕн хăйсен тупăшĕсем çумне хушса 130-шар килограмм выльăх кăшманĕ илеççĕ. Ытти колхозсенче те колхозниксене хăйсен тухăçлă ĕçĕ-хĕлĕсемшĕн хушса тӳлеççĕ. Ку тĕлĕшпе колхозсене райçĕрĕçпайĕн инструкторĕ Панова юлташ нумай пулăшать.

Т. НИКИТИН.

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Буденный ячĕпе тăракан колхозăн план тăрăх гектартан вăтам шутпа ыраш 15 центнер туса илмелле пулнă. Агромероприятисене вăхăтра тата çителĕклĕн пурнăçласа пынипе колхоз гектартан 17-шер центнер илчĕ. Пăри гектартан 11 центнер вырăнне 17 центнер туса илнĕ. Ытти культурăсем енĕпе те çавах—тупăшсем пысăк. Çакăншăн колхоз 55 колхознике 663 центнер та 76 килограмм тĕштырă хушса парать. Çак шутран 1-мĕш бригада 305 центнер, 2-мĕш бригада 280 центнер ытларах илеççĕ.

Çакă колхозниксене хавхалантарать. Колхозра халь çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ.

Н. ВИНОГРАДОВ.

Çителĕклĕ ертсе пымасть

СĔНТĔР. Комсомолăн «Родник» колхоз çумĕнчи организацийĕ чылай йышлă, унта пурĕ 15 комсомолец. Анчах организацин ĕçĕ курăнмасть, мĕншĕн тесен секретарь А. Яндимиркин юлташ ĕçе çителĕклĕ ертсе пымасть. Комсомолецсен пухăвĕ пулманни 4 уйăх çитрĕ ĕнтĕ. Çавăнпа çамрăксем хушшинче «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума укçа пухас, япалапа укçа-тенкĕ лотерейин билечĕсене сарас тата ытти мероприятисене иртерес тĕлĕшпе те ĕç начар пырать.

Ф. ЯНДУШКИН.

Колхоз урхамахĕ

Шыв юххи пек ярăнма та
Çил пек хăвăрт ыткăнма —
Хам вĕрентрĕм, хам ӳстертĕм
Шух чĕреллĕ уттăма.

Йĕлме пĕккĕме кӳлсессĕн,
Карт! туртсассăн чĕлпĕре, —
Пĕкки витĕр уй куратăн,
Çилхи витĕр çил вĕрет...

Чăпăрккасăр та — чарăймăн,
Чĕлпĕртен çеç тыт кăна! —
Шыв-шур урлă, сăрт-ту çийĕн
Çĕмĕрен пек ыткăнать.

Шыв юххи пек ярăнма та
Çĕмĕрен пек ыткăнма —
Хĕрлĕ Çар валли ӳстертĕм
Çил-çунатлă уттăма.

МАКСИМ ЯСТРАН.

Стена хаçачĕсене пăхса тухни

Боевой листок

Ку хаçат Çĕмĕрле древкомбинатĕнчи тăваттăмĕш номерлĕ цехра тухса тăрать. Ăна нумаях та пулмасть, декабрĕн юлашки кунĕсенче—цех коллективĕ çĕнĕ йышши продукци тума тытăннă вăхăтран кăларма пуçланă.

Хаçат рабочисемпе работницăсем тата инженерно-технически работниксем хушшинче пысăк авторитетпа усă курать, ăна пурте юратса, хавхаланса вулаççĕ. Çакă вăл ахальрен мар, хаçат интереслă пулнинчен, кирлĕ ыйтусене вăхăтра тата тĕрĕс çутатса пынинчен килет.

Декабрĕн 20-мĕшĕнче тухнă номерте цехăн пĕр смена хушшинчи ĕçне çутатса панă. Хаçатра уйрăм çитменлĕхсене илсе кăтартнипе пĕрлех, лайăх тĕслĕхсем çинчен те çырнă. Пысăк та мар вăл заметкăсем, вăхăтлă, пурне те ăнланмалла.

«Пирĕн çĕршывăн патриочĕсем тылпа фронт çирĕп пĕрлĕхлĕ пулнине куллен-хи ĕçре кăтартса пыраççĕ,—тенĕ хаçатăн заметкинче.—Курков юлташ ертсе пыракан медниксен бригадине илсен, кунта 30 çын вырăнне 14 çын çеç ĕçлет пулин те, бригада членĕсем хăйсен обязанноçĕсене тивĕçлĕн туса пыраççĕ, пур машинăсене те йĕркеллĕн ĕçлеттереççĕ».

Карелин, Поликарпов бригадисем те декабрĕн 19-мĕшĕнче плана 300 процент тултарчĕç. Леонтьев мастер бригади ăмăртăва сарса пынă май плана 146 процент тултарса ĕçлет».

Стена хаçачĕн ытти номерĕсенче уйрăмăнах графика çирĕппĕн пурнăçласа пырасси çинчен тĕплĕн çутатса панă. Çапла, сăмахран, 13-мĕш номерте ку ыйтупа ятарласах умстатья çырнă.

Çак номертах хаçат питех те кирлĕ ыйтăва — уйрăм бригадăсем лайăх е начар ĕçлени мĕнрен килнине çутатса парать. «Назаров, Абушахмин, Мишуков бригадисем лайăх ĕçлеме пуçлани,—тесе çырать хаçат,—квалификацилĕ рабочисене тĕрĕс вырнаçтарса тухнинчен, хăйсене кирлĕ детальсене хăйсен вăйĕпех тунинчен тата пур кирлĕ материалсене те малтанах хатĕрленинчен килет. Сидошенко бригади вара çаксене туман, вăл такам çине шанса ларнă. Çавна пула бригадăра çитменлĕхсем пур, вăл хăйне панă заданисене тултарса пыраймасть».

Стена хаçачĕ массăпа таччăн çыхăнса ĕçлет, массăна хăй тавра явăçтарать. Çаксем ĕнтĕ хаçата интереслă кăларма, ыйтусене вăхăтра çутатса пыма май параççĕ. Паянхи куна хаçата 20 çынна яхăн çырса тăрать, вĕсен хисепĕнче стахановецсемпе стахановкăсем, инженерсемпе техниксем те сахал мар. Сăмахран, стахановец Ковалев, мастер Поляков, конструктор Иванов, диспетчер Скворцов, технолог Ткаченко юлташсем «Боевой листок» хаçатăн чи активлă корреспонденчĕсем пулса тăраççĕ.

Редколлеги составĕнче 5 çын. Вĕсенчен уйăрăмăнах Никитин, Евлампьев (редактор), Скердинский юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем хаçат тавра рабочи-стахановецсене ытларах явăçтарас тĕлĕшпе калаçусем ирттереççĕ, уйрăм çынсене заметкăсем çырма вĕрентеççĕ. Вĕсем тăрăшнипе юлашки вăхăтра кăна темиçе çын хаçат ĕçне хутшăнчĕç.

Хаçатăн тепĕр лайăх енĕ вăл—хаçат-журналсенчи ӳкерчĕксемпе усă курма пĕлни. Вĕсем кашни номертех пур, вĕсене кирлĕ çĕре вырнаçтарнă. Çапла, çак кунсенче тухнă номерсенчен пĕринче паттăр Хĕрлĕ Çар воинĕсене кăтартнă, çавăнтах хисеплĕ танкистсем пур.

Х. ЛИСИН.

Всевобуч боецĕсен ăмăртăвне лайăх организацилесе ирттерер!

Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн геройла чаçĕсем пыра-пыра çапнипе нимĕç фашисчĕсен «никам çĕнтерейми» текен вăрă-хурахла çарĕ вăрçăн пур фрончĕсенче те хăйĕн техникине, вилнĕ салтакĕсемпе офицерĕсене пăрахса хăварсах каялла чакать.

Хĕрлĕ Çарăн резервĕ—всевобуч боецĕсем—фронтри командирсемпе боецсен пысăк çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса çар ĕçне тимлĕн вĕренет. 110 сехетлĕ программа тăрăх вĕренес ĕç вĕçнелле çывхарса пырать. Çитес кунсенчех вĕренӳ пункчĕсенчен всевобуч боецсен пĕрремĕш ушкăнĕ çар ĕçне вĕренсе тухмалла. Вĕсен пĕлӳлĕхне, халиччен вĕреннине мĕн чухлĕ тарăн ăнланнине тĕрĕслес шутпа ССР Союзĕн Оборона Халăх Комиссариатĕнчи Всевобуч енĕпе ĕçлекен Главнăй Управлени начальникĕ генерал-майор Н. П. Пронин юлташ кăтартса панă тăрăх кăçал мартăн 1-мĕшĕнчен всевобуч боецĕсен ăмăртăвĕ пулса иртмелле.

Ăмăрту всевобуч боецĕсем физически, огневой, химически тата сапернăй подготовка разделĕсемпе çар ретне тăма хатĕррине тĕрĕслес майпа пулса иртет. Ăмăртăва всевобуч системинче вĕренекенсен пурин те хутшăнмалла. Кашни боец çумĕнче ăмăртура учебнăй винтовка (е макет), противогаз, виçĕ учебнăй граната (е болванкăсем) тата саперăн пĕчĕк кĕреçи пулмалла.

Физически подготовка тĕлĕшпе ăмăрту пилĕк тĕрлĕ пулса иртмелле: 5 километрлă хăвăрт марш туса ирттермелле, унта уйрăм вырăнсенче чупса иртесси, пластунла упаленесси, вырăнсене штурмласа илесси пулать. Çавăн пекех тата гранатăсене 25 метр инçете ывăтасси, штыкпа тăрса çапăçасси те пулмалла.

Огневой подготовка тĕлĕшпе ăмăртура пĕчĕк калибрлă винтовкăран 25 метрлă дистанцие вунă хут пĕчĕклетнĕ 9-а (грудная) номерлĕ мишень çине тĕл пемелле, винтовкăна салатса хăвăрт тата тĕрĕс пуçтармалла.

Химически подготовка тĕлĕшпе ăмăрту программине противогаз тăхăнса çырма-çатраллă çул тăрăх 5 километрлă поход тăвасси кĕрет. Çав походра газпа сиенленнĕ вырăнсене çĕнтерсе илмелле, ăна химиллĕ тапăнуран сыхлакан тумтирсене тăхăнса тата алăри материалсемпе усă курса сиенсĕрлетмелле.

Сапер ĕçĕ тĕлĕшпе ăмăртура всевобуч боецĕсен саперăн пĕчĕк кĕреçипе кĕске вăхăтра хăйсем валли выртса пемелĕх шăтăк чавса вырнаçмалла тата боецăн тăшмана систермелле мар хӳтĕленмелле.

Çак çулте асăннă разделсем тăрăх ăмăртăва хутшăннипе пĕрлех, вĕренӳ пункчĕсенчи, всевобуч боецĕсен вăтам шкулсенчи тата çавăн пекех ĕç резервĕсем хатĕрлекен шкулсемпе училищĕсенчи çар ĕçне вĕренекенсен подразделенийĕсем пурте Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулса иртекен кросса та активлăн хутшăнма тивĕçлĕ.

Ăмăртура пысăк пахалăх кăтартас пулсан, халĕ тренировкăсем туса иртермелле. Ăмăртăва хатĕрленсе всевобуч боецĕсен 2—3 километра 5—15 минута хушшинче чупса тухмалла, 5—10 километрлă маршсем туса иртермелле, йĕлтĕрсем çине тăрса 5—10 километрлă походсем тумалла, 15—40 метрлă дистанцие 3—5 секундăра тупса тухмалла, 50 метрлă дистанцие пластунла упаленсе çитме хăнăхмалла тата гранатăна ывăтассипе штыкпа тăрса çапăçассине тăтăшах туса иртермелле. Всевобучăн çак тренировкăсене туса пыракан боецĕсем, паллах, ăмăртура паха çитĕнӳсем тума пултараççĕ.

Вĕренӳ пункчĕсен начальникĕсемпе комиссарĕсен, подразделенисен командирĕсемпе политработникĕсен, учебнăй заведенисен директорĕсемпе военрукĕсен ăмăртăва хатĕрленес ĕçе халех тытăнмалла, программăна хăвăртрах вĕренсе тухмалла, шелӳ тĕрĕслевĕсене ирттерме хатĕрленмелле. Генерал-майор Н. Н. Пронин юлташ хушнипе ăмăртăва организацилесе ертсе пырас ĕçе йăлтах райвоенкоматсем çине хунă.

Ăмăртусене ирттерме районсенче комиссисем организацилемелле. Çав комиссие районри çарĕç комиссарĕ, ВКП(б) тата ВЛКСМ райкомĕсен представителĕсем, Осоавиахим райсоветĕн представителĕ, райвоенкомат инструкторĕ тата военкомат уйăрнипе пĕр секретарь пулмалла. Ăмăртăва вырăнсенче ирттерме военкомат хушнипе кустсенче комиссисем суйламалла тата, кирлĕ пулсан, вĕренӳ пункчĕсемпе учебнăй заведенисенче судьясен уйрăм комиссийĕсене тумалла.

Ăмăрту пулса иртмелли срока районсенче военкоматсем палăртаççĕ. Кирек мĕнле условисем пулсан та, ăмăрту мартăн 1-мĕшчен пур енĕпе те пулса иртмелле. Ăмăрту отчечĕсене облвоенкомата кĕске срокра (3—5 кунра) тăратмалла.

Всевобуч боецĕсен çак ăмăртăвĕ вăл —Оборонăн Государственный Комитечĕн постановленине эпир пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине кăтартса паракан ĕç пулса тăрать.

Парти, комсомол тата профсоюз организацийĕсем, вĕсен руководителĕсем, предприятисен, учрежденисен, колхозсен руководителĕсем, учебнăй заведенийĕсен директорĕсемпе военрукĕсем, вĕренӳ пункчĕсен командирĕсемпе политработникĕсем всевобуч боецĕсен ăмăртăвне ирттерме хатĕрленес ĕçе халех организацилесе, ăмăртăва пысăк пахалăхпа ирттерме мобилизациленмелле. Ăмăртăва паха тĕслĕхсемпе ирттерсе, эпир хамăрăн тăван çĕршыва пĕтĕм вăй-хăватпа хӳтĕлеме хатĕр тăнине кăтартса парар!

Полковник А. БУСЯЦКИЙ.

Вăрçă вăхăтĕнчи налога аванс шучĕпе тӳлеççĕ

КАЛИНИНО. СССР Верховный Совет Президиумĕ «Вăрçă вăхăтĕнчи налог çинчен» кăларнă указа ăнлантарса панă хыççăн районри ĕççыннисем çĕнĕ налога аванс шучĕпе тӳлеме тытăнчĕç.

Чулкаçри «Смычка» колхоз членĕсем: П. Ландышев юлташ 150 тенкĕ тата унăн арăмĕ 150 тенкĕ, А. Михайлова, М. Сорокин, М. Шойкин, А. Семенов, М. Филимонова, И. Иванова тата ытти колхозниксемпе колхозницăсем те вăрçă вăхăтĕнчи налога 100—150-шер тенкĕ тӳлерĕç.

Çавăн пекех Калинино ялсоветне кĕрекен «1-ое Мая» тата «Правда» колхоз членĕсем те вăрçă вăхăтĕнчи налога аванс шучĕпе тӳлеме тытăнчĕç. «1-ое Мая» колхоз членĕсем А. Быков 150 тенкĕ, М. Орлов 150 тенкĕ, Н. Прокопьев 100 тенкĕ тата «Правда» колхоз членĕсем А. Ефимов 300 тенкĕ, Г. Семенов 100 тенкĕ извещени иличченех аванс шучĕпе тӳлерĕç.

Айкăш ялсоветне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем вăрçă вăхăтĕнчи налога аванс шучĕпе 1540 тенкĕ тӳлерĕç. Вăл шутран Ф. Сантимер 150 тенкĕ, П. Ананьев 150 тенкĕ, А. Сантимер 100 тенкĕ тӳлерĕç.

В. ШАХАЛОВ.

Александр Невский

«Çак вăрçăра сире хамăрăн ĕлĕкхи аслă тăвансен — Александр Невскин, Димитрий Донскойăн, Кузьма Мининăн, Димитрий Пожарскийăн, Александр Суворовăн, Михаил Кутузовăн паттăр сăнарĕсем хавхалантарса пыччăр! Сире аслă Ленинăн çĕнтерӳллĕ ялавĕ çул кăтартса пытăр!»

И. В. СТАЛИН.

Авалхи Русь çарĕн чаплă полководецĕ Александр Ярославович Невский вырăс халăхне тăшмансенчен икĕ хутчен çăлнă. Пĕррехинче вăл—1240 çулта Нева хĕрринче шведсене çĕнтерсе, тепринче—1242 çулта Чудь кӳлли çинче нимĕç рыцарĕсене çĕмĕрсе тăкса чапа тухнă. Çакăн пирки пирĕн халăх Александр Невскийĕн пысăк çĕнтерĕвĕсемпе пархатарлă ĕçĕсене яланах асра тытать, унăн ятне ĕмĕртен ĕмĕре хисеплесе пурăнать.

Александр Ярославович 1220-ш çулта (тепĕр кăтартусем тăрăх 1219 çулта) майăн 30-мĕш кунĕнче Переяславль-Залесск хулинче çуралнă. Çав вăхăтра унăн ашшĕ кунта аслă князь пулса пурăннă.

А. Невский çуралса ӳснĕ вăхăтра вырăс çĕршывĕ пысăк йывăрлăхсем тӳснĕ. Русь çĕрне кăнтăр-хĕвелтухăç енчен тутар-монголсен ордисем çĕмĕрсе кĕнĕ. Хĕвеланăçĕнчен — нимĕçсемпе шведсен крестоносец-рыцарĕсем тапăннă. Çакăнпа пĕрлех, Русь çĕрĕнче хăйĕнче те пурнăç лăпкă мар пулнă: вырăс çĕрĕ ун чух нумай княжествăсем çине вакланса тăнă, çав княжествăсем пĕр-пĕринпе текех вăрçса, çĕршыв хуçалăхне юхăнтарса пынă, халăха усăсăр вăрçăсенче пĕтернĕ. Пĕтĕм вырăс халăхĕ пĕр государствăна пĕрлешсе пĕр пысăк вăй пулнă пулсан, тапăнса кĕрекен тăшмансене хирĕç кĕрешме те çăмăлрах пулнă пулĕччĕ. Анчах та вак княжествăсем хушшинче пĕрлĕх пулман.

Русь çĕрне тутар-монголсем парăнтарса илни вырăс халăхне çавтери пысăк асапсем кӳнĕ. Тутар-монгол ордисем нумай вырăс хулисемпе ялĕсене çунтарса янă, вĕсенчи халăха вĕлерсе пĕтернĕ, чĕрĕ юлнисем çине тӳсейми пысăк хырçăсем хунă. Çакна пула, нумайĕшĕсем вăрмансене, улах вырăнсене тарса пĕтнĕ. Халăх пурăнакан облаçсем сасартăк çаралса, пушанса юлнă. Летописец çырса хăварнă тăрăх: «Сухапуçĕсем çаплипех сухаласа пĕтерейĕмен уйсенче тăнă, хăйĕн ĕçĕсене пĕтереймен тимĕрçĕн вучаххи сӳнсе ларнă. Аслă çĕршыв тăрăх çил шăхăрса, çуннă хуласемпе ялсенчи кĕле вĕçтернĕ. Русь çĕрĕнче çын макăрса йынăшни çеç илтĕннĕ».

Тутар-монголсем тустарнипе вырăс çĕршывĕн уйрăмăнах кăнтăрпа хĕвелтухăç енчи облаçĕсем çаралса çитнĕ. Ку инкекрен пĕр Новгород-Русь çĕрĕ çеç çăлăнса юлнă. Унăн аслăн саралса выртакан çĕрĕ çинче Новгород-Великий, Псков тата ытти пысăках мар хуласем те шутланса тăнă. Çак хуласем Хĕвелтухăç енĕпе тата Хĕвеланăç енчи çĕршывсемпе вăйлă суту-илӳ туса пурăннă. Новгород çĕрĕнче алăсталăх промышленноçĕ те вăйлăн саралнă пулнă. Чечекленсе тăракан пуян хуласемлĕ Новгород çĕрне, паллах, ютçĕршыв захватчикĕсем ăмсанмасăр тăма пултарайман. Çакна пула XII—XIII ĕмĕрсенче Новгород çĕрĕ çине шведсемпе нимĕç рыцарĕсен ордисем тапăнма тытăнаççĕ.

1224-мĕш çултан пуçласа Новгород—Великийпе юнашар çĕрсем çине час-часах нимĕç рыцарĕсем тапăнма пуçлаççĕ. Вĕсене вырăссем пĕрре çеç мар хăваласа янă. 1234 çулта Александр Невский ашшĕ, Ярослав, нимĕçсене Юрьев хули патĕнче хытă аркатса тăкнă. Вырăссен вăйĕ çирĕп тăнине курă, нимĕç рыцарĕсем хăйсен вăйĕсене пĕрлештерме шут тытаççĕ. Çапла вара, вĕсен меченосецсен орденĕ текен ушкăнĕпе тевтонсен орденĕ пĕрлешсе тăраççĕ. Ку пĕрлешнĕ вăй Новгородшăн хăрушă тăшман пулса тăнă.

1237 çулта Римри папа XI-мĕш Григорий пĕтĕм католиксене Русь çĕрĕ çине «крестовăй поход» тума чĕннĕ. Çĕнсе илнĕ славян халăхĕсене Григорий католик тĕнне кĕртме шухăшланă.

Римри папа чĕнĕве малтан швед рыцарĕсем хапăлласа йышăннă. Швед рыцарĕсем вырăссен усал тăшманĕсем пулнă. Новгород çĕрĕсене тытса илес тесе, вĕсем икĕ çул ытла хатĕрленнĕ. 1240-мĕш çулта шведсем, темиçе пин çынлă çар пухса, Биргер çарпуçлăхĕ ертсе пынипе, сасартăк вырăс çĕрне килсе кĕреççĕ. Вĕсен карапĕсем, Варяг (Балтика) тинĕсĕ урлă каçса, Нева патĕнче чарăннă та кунта çарĕсене типçĕре кăларса лагерь туса хунă.

Александр Ярославович ун чух çамрăк князь пулнă. Шведсем вăрçăпа килни çинчен ăна Нева хĕрринче хуралта тăнă вырăс çыннисем пĕлтернĕ. Çакăн хыççăнах Александр патне швед рыцарĕсен çарпуçлăхĕ Биргер мăнкăмăллă пĕлтерӳ янă. «Вăю çитсен—хирĕç тăр. Эпĕ кунтах ĕнтĕ, санăн çĕрне çавăрса илетĕп», тенĕ вăл. Александр хăраса тăман. Малтанах хатĕрленсе тăнăскер, вăл, хăвăрт пуçтарăнса, шведсене хирĕç кайнă.

Шведсем Александр часах тухасса кĕтмен. Вăл хирĕç тăрсан та, вĕсем унăн дружинине часах çĕнтерессе шаннă. Анчах та Александр, пĕтĕм войски пухăнасса кĕтсе тăмасăрах, чи хăюллă дружинниксене суйласа илнĕ те шведсен лагерĕ патне хăвăрт пырса çитнĕ. Çапăçу Нева хĕрринче, 1240-мĕш çулти июлĕн 15-мĕшĕнче, ирхине ирех пуçланса кайнă. Александр дружини, шведсен лагерьне сасартăк вăркăнса кĕрсе, вĕсене хĕçсемпе, пуртăсемпе касма тытăннă. Швед рыцарĕсем нумайĕшĕ хăйсен çумĕнчи хĕçĕсене вĕçерсе илме те ĕлкĕреймен, вырăссем вĕсене каса-каса ӳкернĕ. Çапăçура Александр хăй малта пынă. Унăн çӳллĕ кĕлетки тата илемлĕ шлем тăхăннă пуçĕ ытти çынсем хушшинче уйрăмăнах палăрса тăнă. Александр хăй шведсен çарпуçлăхне Биргера касса питĕнчен суранлатнă. Хаяр çапăçура Новгород çарĕ шведсене пуçĕпех çĕмĕрсе тăкнă. Нумай рыцарьсем пĕтнĕ. Чĕррĕн юлнисем хыпаланасах карапсем çине ларса хăйсен çĕрне тарнă. Нева шывĕ хĕрринче çакăн пек чаплă çĕнтерĕве тунăшăн Александр Ярославовича халăх «Невский» текен ят панă.

Çав çулсенчех вырăс çĕрне нимĕç рыцарĕсен йыткĕтĕвĕсем (Тевтон орденĕпе меченосецсен орденĕн пĕрлештернĕ çарĕсем) килсе кĕнĕ. Кунччен маларах Литва, Латви, Эстони çĕрĕсене çаратса тухнăскерсем, халĕ ĕнтĕ вĕсем 1241—42 çулсенче Новгород-Руçĕн Луга, Тесов хулисене тата Копорье ятлă вырăна йышăнса илнĕ, вĕсенче хăйсен наступленине малалла ямалли укреплениесем туса хунă.

1241-мĕш çулта Изборск хули патĕнче вăйлă çапăçу пулса иртнĕ. Çапăçура нимĕçсем çиеле тухнă. Вĕсем Изборска йышăнса илнĕ. Кунта нимĕç рыцарĕсем хăйсен техникипе тата хĕçпăшалĕ вăйлă пулнипе çĕнтернĕ. Нимĕçсем вырăс дружинисем хушшине хăйсем юратакан майпа—войскăсен речĕсене савăл пек тăратса пырса кĕнĕ. Ку савăлăн вĕçĕнче, малта, тата айккисенче тимĕр броньăпа, кольчугăпа тумланнă юланутлă рыцарьсем йĕрки-йĕркипе пынă. Юланутлă строй варринче пехота пулнă. Вăрçă тактики тăрăх, малтан çак юланутлă рыцарьсен речĕсем вырăс дружинисен речĕсене татса сапаласа ямалла пулнă, çакăн хыççăн тин пехота тухса вырăссене пĕтерсе тăкмалла пулнă. Нимĕç войскисем çакăн пек тактикăпа вăрçнин, вĕсем хăйсен противникĕ çине савăлланса е сысна сăмси пек шĕвĕртсе тăратнă ретсемпе пырса кĕнине ун чухнехи вырăссем питех те вырăнлă сăмахпа—«нимĕç сысни» тесе каланă.

Изборска илнĕ хыççăн нимĕçсем Новгород çĕрне шалтан шалалла кĕрсе пынă, Псков патне çитнĕ. Анчах та тĕреклетнĕ хулана ниепле те илеймен. Юлашкинчен, хулари хăшпĕр пуян боярсем тăшман майлă çавăрăннипе çеç нимĕç рыцарĕсем Пскова пырса кĕнĕ.

Рыцарьсен йыткĕтĕвĕ Новгород патне çывхарнă. Çак вăхăтрах вĕсем хăйсем йышăнса илнĕ вырăс хулисемпе ялĕсене тĕппипех çаратса тухнă. Нумай ялсене çунтарса янă. Ун чухнехи Новгород летописецĕ çырса хăварнă тăрăх, крестоносецла нимĕç вăрă-хурахĕсем пырса çитнĕ вырăнсенче суха туса тырă акма та çынни те, лаши те юлман. Выльăх-чĕрлĕхсене йăлтах хăваласа кайнă, вăйпитти арçынсене вĕлернĕ. Хĕрарăмсене, ачасене залогниксем вырăнне тыткăна илсе кайнă. Çаратса пухнă пурлăхсене нимĕç рыцарĕсем хăйсем хушшинче валеçнĕ. Çавăн пек ĕнтĕ тăранми, выçлăхлă, тискер пулнă хальхи нимĕç фашисчĕсен ĕлĕкхи аслашшĕсем—тевтон рыцарĕсем. Нимĕç фашисчĕсем халĕ çав рыцарьсене «вĕсем германецсен аслă расин çыннисем пулнă» тесе хисеплеççĕ. Вĕсем халĕ хăйсен тискер ĕçĕсене çав рыцарьсенчен вĕренсе, çав тискерлĕхе анлăраххăн та нумай ирсĕртерехххĕн туса пыраççĕ!

Нимĕç захватчикĕсем Новгород патне çывхарнă чух Александр Невский Переяславль—Залесскинче пурăннă. Новгород çыннисем хăйсен хулине Александр çеç çăлма пултарасса ăнланнă. Çавăнпа та вĕсем Александра чĕнме Переяславле çынсем (посольство) янă. Александр хăвăртрах Новгорода пыма тата унти вырăссен войскине ертсе пырас ĕçе хăй çине йышăнма ыйтнă. Александр Невский килĕшнĕ. Вăл, Новгорода таврăнса, хула оборонине çирĕплетнĕ; Новгород, Ладога, карел, ижор çыннисенчен çар пухса, васкасах нимĕçсене хирĕç—Финн заливĕ патнелле кайнă. Унта, нимĕçсем тĕреклетнĕ Копорье крепоçне туртса илсе, сăм...

Юлашни 4-мĕш страницăра

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн пленумĕ

Январĕн 27—28-мĕшсенче ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн черетлĕ IV пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум икĕ ыйту — 1942 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене кăтартуллă туса ирттерес тĕлĕшпе комсомол организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен тата ЦК ВЛКСМ комсомолăн шкулсенчи организацийĕсен 1941—42 вĕренӳ çулĕнчи ĕçĕсем çинчен йышăннă постановлени республикăри шкулсенче мĕнле пурнăçа кĕрсе пыни çинчен сӳтсе-яврĕ.

Пĕрремĕш ыйтупа Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн политсектор начальникĕ В. Чернов юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик кăçалхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе комсомол организацийĕсем ку таранччен тунă ĕçсем çинчен каларĕ. Шупашкар районĕнчи «Молния» колхозри комсомолецсем 3.000 лав тислĕк тăкнă. Çĕрпӳ районĕнчи Йĕкĕрварти вăтам шкулта вĕренекенсем вырăнти удобренисене пухас ĕçе активлăн хутшăннă.

Шăмăршă МТС-нчи комсомолецсемпе çамрăксен бригади ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене юсас тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартать. Бригада членĕсем Моисеев, Морозов, Буянкин комсомолецсем кулленхи нормăна 200-шер процент тултарса ĕçлеççĕ. Ку бригада пурĕ 15 трактор, 14 плуг, 5 сеялка тата 6 культиватор юсанă.

Шăхасан районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене йăлтах юсаса пĕтерне. Кузнецов комсомолец тимĕрçĕ пулса ĕçлет. Вăл хăй пĕччен 28 плуг, 6 сеялка, 23 сӳре юсанă.

Ялхуçалăх машинисене юсас ĕç колхозсенче тимĕрçĕсем çитменнипе чăрмавланса тăнине кура, Етĕрне районĕнче 6 комсомолеца опытлă тимĕрçĕсем çумне çирĕплетсе вĕрентнĕ.

Пăрачкав, Çĕмĕрле, Улатăр МТС-сенче кадрсем хатĕрлес ĕçе аван йĕркеленĕ. Пăрачкав районĕнче планпа пăхнă 60 çын вырăнне 108 çын тракторист пулма вĕренеççĕ, халĕ 30 çынран тата тепĕр группа организацилеме хатĕрленеççĕ.

Анчах çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе комсомол организацийĕсем çак таранччен тунă ĕçсем çителĕксĕр. Комсомолăн нумай организацийĕсем ку ĕçе тивĕçлипе тытăнман-ха. Юлашкинчен докладчик комсомол организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен чарăнса тăчĕ.

Доклад тăрăх пренире ВЛКСМ райком секретарĕсем, МТС-сенчи политотдел начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕсем тата ЧАССР Совнарком Председателĕн заместителĕ С. К. Коротков, Ялхуçалăх институчĕн профессорĕ Пельцих, ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн хресчен çамрăкĕсен отделĕн заведующийĕ А. Кузнецова, ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчи политсектор начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕ А. Ерлагов юлташсем тухса каларĕç.

Комсомолецсем чи малтанах çитес çураки валли паха вăрлăх хатĕрлесе хума тивĕçлине палăртрĕç вĕсем. Вăрлăхлăх тырра сортласа тасатас тата ăна сыхласа усрас тĕлĕшпе ятарласа комсомолецсемпе çамрăксен звенисене, бригадисене организацилемелле. Ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене тата кӳлмелли хатĕрсене юсас тĕлĕшпе комсомол организацийĕсем пуçланă ĕçе татах та вăйлатмалла. Тухса калаçакансем ялхуçалăх ĕçĕнчи кадрсене хатĕрлес ыйтăва тĕп вырăна хума кирлине те палла турĕç.

Иккĕмĕш ыйтупа пленум ВЛКСМ Чăваш Обком секретарĕн П. Михайлов юлташăн докладне итлерĕ.

Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсен 1941—42 вĕренӳ çулĕнчи ĕçĕсем çинчен ЦК ВЛКСМ йышăннă постановление пурнăçлас тĕлĕшпе республикăри шкулсем сахал мар ĕçленĕ. Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенчи йывăрлăхсене пăхмасăрах, нумай шкулсенче ачасем вĕренӳре ĕлкĕрсе пырасси ӳснĕ. Комсомолецсем вĕренӳре пример кăтартаççĕ. Ишлей районĕнче пĕрремĕш çурçуллăхри итогсем тăрăх, мĕнпур вĕренекенсенчен 90 проценчĕ вĕренӳре ĕлкĕрсе пырать, шкулсенчи комсомолецсенчен вара 97 проценчĕ ĕлкĕрсе пырать. Республикăри учительсемпе вĕренекенсем тăван çĕршыва, Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ.

Михайлов юлташ хăйĕн докладĕнче шкулти çитменлĕхсем çинче те чарăнса тăчĕ. Хăшпĕр çĕрте ачасем вĕренӳре чылай ĕлкĕрсе пыраймаççĕ, шкула пĕр сиктермесĕр çӳрессишĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ. Эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ ачасене пулăшас тĕлĕшпе ĕç начартарах пырать.

Михайлов юлташ доклачĕ тăрăх пренире 14 çын тухса калаçрĕ. Шкулти вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе комсомол организацисем тумалли ĕçсене палăртса, ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ М. Макаровпа ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Т. Ахазов юлташсем тухса каларĕç.

Пленум икĕ ыйтăвĕпе те тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Заем укçине срокчен тӳлесе татаççĕ

ЙĔПРЕÇ. Районри ĕççыннисем Виççĕмĕш пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) заемĕн укçине срокчен тӳлесе татаççĕ, вĕсем Хĕрлĕ Çара татах та пысăкрах çĕнтерӳсем тума пулăшаççĕ.

Крахмал заводĕнче ĕçлекенсем заем укçине 4 уйăх хушшинче тӳлесе татнă. Госбанкăн Йĕпреçри уйрăмĕнче, Семлабораторире, Госстрахра ĕçлекенсем заем укçине 7 уйăх хушшинче тӳлесе татма пулнă.

[illegible] колхозниксем те заем укçине срокчен тӳлесе татма тăрăшаççĕ. Январĕн 20-мĕш тĕлне районри 20 колхоз заем укçине [illegible] тӳлесе татнă. Ку йĕре Çĕнĕ Чурашĕ ялсоветĕнчи заем уполномоченнăйĕсем уйрăмах лайăх ĕçлерĕç. Çак ялсоветри колхозсем: «Ударник», «Чувашия», «Красный пахарь» колхозсем заем укçине [illegible] тӳлесе пĕтерне.

Юлашки вăхăтра заем укçине пухас ĕçе чылай ялсоветсенче вăйлатрĕç. Чăрăшкасси ялсовечĕ иртнĕ уйăхсенче юлса пынă. Халĕ кунта фронтран таврăннă Кириллов юлташ кĕске вăхăтрах пысăк улшăну тунă. Кириллов юлташ иртнĕ вунă кун хушшинче кăна 1626 тенкĕ заем укçи пухса панă.

— Заем укçи тăван çĕршыв оборонине [illegible] — тет Кириллов юлташ.

[illegible]

Д. МИХАЙЛОВ.

Александр Невский

(Юлашки. Пуçламăшĕ виççĕмĕш страницăра)

[illegible]

1242 çулти апрелĕн 5-мĕшĕнче [illegible] «Ледовое побоище» [illegible]

П. ГРИГОРЬЕВ.

ИРАН МЕДЖЛИСĔ СССР, ВЕЛИКОБРИТАНИ ТАТА ИРАН ХУШШИНЧИ СОЮЗ ÇИНЧЕН ДОГОВОР ТУМА ИРĔК ПАНĂ

ТЕГЕРАН, январĕн 27-мĕш. (ТАСС). Меджлис СССР, Великобритани тата Иран хушшинче союз тăвасси çинчен çырнă договора сӳтсе-явса, хăйĕн 26-мĕшĕнчи ларăвĕнче Иран правительствине çав договор çине алă пусма ирĕк парасси çинчен решени йышăннă. Çав решени майлă меджлисăн 80 членĕ, хирĕç—8 членĕ сасăланă. Меджлисăн 5 членĕ сасăланă çĕре хутшăнман. Договора çитес кунсенчех алă пусса çирĕплетмелле. Договорăн текстне СССР, Великобритани тата Иран правительствисем хушшинче килĕштернĕ.

Договор тăрăх, ССР Союзĕпе Великобритани Иран территорийĕн тĕрĕстĕкеллĕхне, суверенитетне тата никама пăхăнманлăхне хисеплеме, ун çине Германи е пĕр-пĕр урăх держава тапăнассинчен хăйсен аллинчи пур средствăсемпе те ăна хӳтĕлеме, çавнашкалах тата Иран интересĕсене пырса тивекен пур ыйтусене те Иран правительствипе килĕштерсе татса пама сăмах парӑççĕ.

Хăй енчен Иран правительстви хăй аллинчи пур средствăсемпе те союзлă государствăсемпе пĕрле ĕçлесе пыма тата союзлă пĕр государствăран союзлă тепĕр государствăна çарсемпе снабжени иле чухне Иранри чугунçул семпе, шоссе çулĕсемпе усă курма союзлă правительствăсене ирĕк пама обязательство илет. Союзлă государствăсене Иран территорийĕ çинче кирлĕ таран типçĕр çинчи, тинĕсри тата сывлăшри войскăсене тытма право парать. Çак войскăсене союзлă государствăсем Германие тата ун майлисене хирĕç вăрçма чарăннă хыççăн, 6 уйăхран кая юлмасăр, Иран территорийĕнчен илсе тухса каймалла.

ССР Союзĕпе Великобритани Иран халăхĕн экономикăллă пурнăçĕнче вăрçă пирки пулакан йывăрлăхсене пур майсемпе те çăмăллатма сăмах параççĕ. Договор тăвакан государствăсем çак союзлă договорта кăтартнă постановленисене хирĕçлекен договорсем тума юраманни çинчен обязательство илеççĕ.

ХĔРЛĔ ÇАРĂН ÇĔНТЕРĔВĔСЕМ ÇИНЧЕН ЮТÇĔРШЫВ ХАÇАЧĔСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 26-мĕш. (ТАСС). Каçхине тухнă пур хаçатсем те Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем çинчен пĕлтерни сене чи курăнмалла вырăнта тата пысăк заголовоксемпе пичетлесе кăларнă. «Нью-Йорк пост» хаçатăн вăрçă ĕçĕсен обозревателĕ çапла çырать: «Хĕрлĕ Çарăн юлашки вăхăтри çĕнтерĕвĕсем Германин позицийĕсене пысăк сиен кӳнĕ. Гитлер пуçарулăха сухатрĕ, çакă ĕнтĕ питĕ те паха».

Радио-обозреватель Солох радио тăрăх: Хĕрлĕ Çар çĕнĕрен питĕ чаплă çитĕнӳсем турĕ, тесе каланă. Обозреватель Хелл çапла кăтартса панă: Хĕрлĕ Çар наступлени туса пыни пысăкрах та пысăкрах вырăн йышăнса гăма пуçлать, тенĕ.

Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Баботран пĕлтернĕ тăрăх, Колумбири хаçатсем пурте совет войскисен çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем çинчен калакан пĕлтерӳсене курăнмалла çĕрте пичетлесе кăларнă. Хаçатсем Хĕрлĕ Çар юлашкинчен çĕнтерессине тата гитлерла Германия пуçĕпех поражени тӳсессине шанса тăни çинчен пĕлтерсе çыраççĕ.

ЛОНДОН, январĕн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин вăрçă ĕçĕсен обозревателĕ çапла çырать: Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕпе Калинин фронтĕнчи операцисем советсен верховнăй командованийĕ хĕллехи кампание çавтери лайăх хатĕрленнине тата вăл малашнехине нумай малтан курса тăнине кăтартса параççĕ. «Германин командованийĕ, — тесе çырать обозреватель, — Российăна пĕрре пырса çапсах тата хĕле кĕриччен стройран кăларма ĕмĕтленнĕ, вăл хăйĕн çарĕсене хĕллехи уйăхсем валли кирлĕ обмундированипе снаряжени пама шухăшламан та. Совет командованийĕ хăй вăрçă мĕнле пулса пынине нимĕç командованийĕнчен тĕрĕсрех ăнланнине кăтартса пачĕ», — тет.

ЛОНДОН, январĕн 26-мĕш. (ТАСС). «Обсервер» хаçат редакторĕ Гарвин çапла çырать: Хĕрлĕ Çар юлашки вăхăтра тунă çĕнтерӳсем малашнехи татах та пысăкрах çĕнтерӳсен пуçламĕшĕ пулса тăма пултараççĕ. Ку çĕнтерӳ пуринчен те ытларах Сталинăн хурçă пек çирĕп вăй-хăвачĕн тата унăн организаторла таланчĕн триумфĕ пулса тăрать. Мускав хăйне хӳтĕлесе тăчĕ кăна мар, çакăнпа пĕрлех вăл активлăн тăракан крепость вырăнне те пулса, пысăк ĕçсем туса хучĕ. Вырăссем, тен, Германин хĕл вăхăтне валли тунă пĕтĕм планĕсене аркатса тăкса, противника çĕнĕрен йывăр çухатусем кӳме пултараççĕ пулĕ, вара противникăн малашне те чакса пымалла пулать. Хĕрлĕ Çар пирĕн çĕр чăмăрĕн икĕ енчипелех пĕрлешнĕ халăхсен пĕрлехи ĕçне халĕхи вăхăтра çавтери пысăк усă кӳрет, кунтан ытларах усăллă ĕç урăх ниепле те тума çук теме пулать.

«Санди экспресс» хаçат редакторĕ çапла çырать: Россия пире вăрçăра тăшмана мĕнле çĕнтермеллине кăтартса парать. Совет Союзĕнче çӳлтен пуçласа аяла çитиччен, Кремльрен тытăнса хресчен пӳртне çитиччен, тăван çĕршывшăн пурăнса уншăн ĕçлес шухăш-кăмăл питех те вичкĕн курăнса тăрать.

КРИППС ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, январĕн 24-мĕш. (ТАСС). Англин Совет Союзĕнчи посолĕ пулнă Стаффорд Криппс Лондонри пресс-конференцире сăмах тухса каланă. Тин çеç Лондона таврăннăскер, Криппс хăй енчен вырăссем Германие татăклăн çĕнтерме пултарассине тата çак тĕлĕшпе вĕсем мĕн кирлине пурне те тума вăй çитерессине ĕненсе тăни çинчен каласа панă.

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчи ĕçсем çине хавасланса кăна пăхмалли çинчен каланă хыççăн Криппс: «анчах та çакă вăл тытăннă ĕçе вăйсăрлатассине пĕлтермест. Вырăссем те, англичансем те Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче татăклă çĕнтерӳ тăвас тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хума пулчĕç», тенĕ.

«Сталин хăй аслă çулпуç тата çавтери пысăк стратег иккенне кăтартса пачĕ,—тенĕ малалла Криппс. — Мускава хӳтĕлесе хăварса пысăк наступлени пуçарса ямалли стратегиллĕ тĕп план вăл—Сталин хăй палăртса хунă стратеги пулса тăрать. Вырăс халăхĕ ăна вĕçĕ-хĕррисĕр шанса тăрать. Хальхи событисене пула вырăссен нумай жертвăсемпе йывăрлăхсем тӳсмелле пулчĕ, анчах çапах та вырăс халăхĕн паянхи вăй-хавалĕ халиччен хи пек мар çӳлте тăрать. Халăх çавăн пек паттăрлăхпа хавхаланнине эпĕ нихăçан та курман».

«Эпĕ Российăна вырăс халăхне чĕререн юратса тăнă туйăмпала кайрăм, — тенĕ вăл малалла,—çак сисĕм-туйăм манăн ССР Союзĕнче пурăннă вăхăтра пысăк савăнăçпа тулса çитрĕ. Нумай çынсем Германин çиçĕмле атакисене вырăссем сирсе яма пултараяс çук, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен тылне организацилеме пултараймаççĕ, тесе шутлатчĕç. Ку тĕлĕшрен вырăссем уйрăмах хăйсен промышленноçне, ялхуçалăхне тата снабжени ĕçĕсене организацилеме пултарни пурне те тĕлĕнтерчĕ пулмалла. Совет çĕршывне çитĕнӳсем тума май панă тĕп сăлтав вăл—кашни уйрăм вырăс çынни — хресчен те, рабочи те çĕршыв умĕнче тӳрĕ кăмăллă пулса, уншăн кĕрешме яланах хатĕр тăни пулса тăрать. Фашизма хирĕçле сисĕм-туйăм Российăра вăрçăччен те питĕ вăйлă пулнă, Германия кĕтмен çĕртен пырса тапăннă хыççăн кашни вырăс çынни хăйĕн тăван çĕршывне, темĕнле йывăр пулсан та, хӳтĕлесе хăвармаллах тесе шухăш тытрĕ».

Малалла Криппс Хĕрлĕ Çар командирĕсен пултарулăхне кăтартса парса мухтанă: хаваслăх кӳрекен факторсенчен тепри вăл — вырăссем вăрçă вăхăтĕнче пит те нумай çамрăк генералсен пултарулăхĕсене палăртса вĕсемпе усă курни пулса тăрать, тенĕ вăл. Мускав фронтĕнчи çапăçусем вăхăтĕнче 30 çулти çамрăк офицерсенех, вĕсен паллă пултарулăхĕсене кура, тĕрлĕ секторти пысăк командăй вырăнсене куçарчĕç, вĕсем хăйсене панă задачăсене пит те чаплăн пурнăçа кĕртме пултарчĕç. «Çакăн пек туни пĕр Российăшăн çеç мар, вăл, тен, ытти çĕршывсемшĕн те кирлĕ урок пулса тăма пултарĕ», тенĕ Криппс.

Юлашкинчен Криппс Совет Союзĕн хĕвелтухăç облаçĕнчи промышленноçĕ вăйлăн ӳссе пыни çинчен пĕлтернĕ. Криппс каланă тăрăх, вырăссен кунти промышленноçĕ вăрçă пуçланичченхипе танлаштарсан икĕ-виçĕ хут ытла ӳснĕ. Ку шута вăрçă вăхăтĕнче хĕвелтухăçнелле куçарнă предприятисем туса кăларакан продукци кĕмест, тенĕ вăл. Панă ыйтусене хирĕç ответлесе, Криппс: Совет Союзĕнче танксем тата самолетсем хальхи вăхăтра 1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕ тĕлне тунинчен ытларах кăларса тăраççĕ, тенĕ.

Англи авиацийĕ Германи çине тапăнни

ЖЕНЕВА, январĕн 27-мĕш (ТАСС). Берлинри радио пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Çурçĕр Германири халăх пурăнакан хăшпĕр пунктсем çине бомбăсем пăрахса темиçе çурта сиен кӳнĕ. Вилнисемпе аманнисем пур. Уйрăм самолетсем Берлин таврашне çитиех вĕçсе пынă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

„Вăрçă вăхăтĕнчи налог çинчен" СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1941 çулти декабрĕн 29-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх тата СССР Финанс Халăх Комиссариачĕ 1942 çулти январĕн 7-мĕшĕнче кăларнă инструкци тăрăх, Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕ çакна

ПĔЛТЕРЕТ:

1. Рабочисемпе служащисем тата подоходнăй налог тӳлес тĕлĕшпе вĕсемпе танлаштарнă ытти граждансем, çавнашкалах тата литераторсемпе искусство работникĕсем вăрçă вăхăтĕнчи налога, çулталăкри ĕçукçин хисепĕ аялта кăтартнă чухлĕ пулсан, çакăн чухлĕ тӳлеççĕ:

1.800 т. таран пулсан,		120 т.
2.400 » »	»	180 »
3.600 » »	»	240 »
4.800 » »	»	360 »
6.000 » »	»	480 »
7.200 » »	»	660 »
8.400 » »	»	780 »
9.600 » »	»	900 »
10.800 » »	»	1.020 »
12.000 » »	»	1.140 »
14.400 » »	»	1.320 »
16.800 » »	»	1.560 »
19.200 « »	»	1.800 »
21.600 » »	»	2.040 »
24.000 » »	»	2.280 »
24.000 т. ытларах пулсан,		2.700 »

Çул çитнĕ тăрăх призывпа действительнăй çар службине е мобилизаципе Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне тата Тинĕс-Çар Флотне кайма тивĕçлĕ, анчах мобилизацилемен е призывран хăтарнă граждансем вăрçă вăхăтĕнчи налогăн çакăнта кăтартнă ставкисене 50 процент ӳстерсе тӳлеççĕ.

Рабочисемпе служащисем вăрçă вăхăтĕнчи налога кашни уйăхрах, 1942 çулти январĕн иккĕмĕш çур уйăхĕшĕн ĕçукçи тӳленĕ вăхăтран тытăнса, çулталăкра тӳлемелли налог суммин 1/12 пайне тӳлесе пыраççĕ. Çулталăкра тӳлемелли налог суммине рабочисемпе служащисем ĕçлекен тĕп вырăнти çулталăкри ĕçукçи хисепĕ тăрăх шутласа кăлараççĕ.

Рабочисемпе служащисен вăрçă вăхăтĕнчи налогăн тӳлемелли суммине шутласа кăларма кирлĕ çулталăкри ĕçукçи хисепне иртнĕ уйăхри ĕçукçи тăрăх пĕлеççĕ.

Çакăнта каласа пани тăрăх ĕнтĕ рабочисемпе служащисенчен кашни уйăхрах вăрçă вăхăтĕнчи налога çакăн чухлĕ тытса юлаççĕ:

Иртнĕ уйăхри ĕçукçи хисепĕ				Вăрçă вăхăтĕнчи налогăн иртнĕ уйăхăн иккĕмĕш çур уйăхĕнчи ĕçукçинчен тытса юлмалли хисепĕ
150 т. таран				10 т.
151 т. пуçласа	200 т.	таран		15 »
201 т. »	300 »	»		20 »
301 т. »	400 »	»		30 »
401 » »	500 »	»		40 »
501 » »	600 »	»		55 «
601 » »	700 »	»		65 »
701 » »	800 »	»		75 »
801 » »	900 »	»		85 »
901 » »	1.000 »	»		95 »
1.001 » »	1.200 »	»		110 »
1.201 » »	1.400 »	»		130 »
1.401 » »	1.600 »	»		150 »
1.601 » »	1.800 »	»		170 »
1.801 » »	2.000 »	»		190 »
2.001 тенкĕрен пуçласа малалла —				225 »

Рабочисемпе служащисенчен вăрçă вăхăтĕнчи налога подоходнăй налог тытса юлакан ĕçукçи хисепĕнченех шутласа тытса юлаççĕ.

Рабочисемпе служащисем, çав шутрах тара кĕрĕшсе яланхи ĕçре службӑра тăракан литераторсемпе искусство работникĕсем те, хăйсен ĕç вырăнĕнче илекен ĕçукçисĕр пуçне, ытти организацисенче совместительство йĕркипе ĕçлесе е вăхăтлăх ĕçсем тунипе ĕçукçисем илнĕ, е урăх тĕрлĕ тупăшсем тунă пулин те, вăрçă вăхăтĕнчи налога хăйсем ĕçлекен тĕп вырăнта çеç тӳлеççĕ.

Тара кĕрĕшсе яланхи ĕçре службӑра тăман литераторсемпе искусство работникĕсенчен вăрçă вăхăтĕнчи налога ĕçукçи тӳленĕ чухне вĕсем тӳлемелли налогăн çулталăкри сумми чухлех тытса юлаççĕ. Малашнехи тӳлевсенче вара, çулталăк хушшинче мĕн чухлĕ ĕçукçи тӳлени тăрăх тата вăрçă вăхăтĕнчи налогăн малтан тытса юлнă суммисене шута илсе, вăрçă вăхăтĕнчи налогăн суммине çĕнĕрен шутласа кăлараççĕ. Анчах та вăрçă вăхăтĕнчи налогăн пур вырăнсенче те çулталăк хушшинче тытса юлнă сумми 2700 тенкĕрен ытла пулмалла мар.

Тара кĕрĕшсе яланхи ĕçре тăман, анчах та предприятисем, учрежденисемпе организацисем валли вăхăтлăх ĕçсем тăвакан граждансене ĕçукçи тӳленĕ чухне вĕсем çулталăкне тӳлемелли налогăн 1/12 пайне тытса юлаççĕ. Çулталăкне тӳлемелли налогăн хисепне пĕлес тесе, çак уйăхра тӳленĕ ĕçукçин хисепĕ тăрăх çулталăкри ĕçукçи хисепĕ мĕнле пулмаллине шутласа кăлараççĕ. Вăхăтлăх ĕçсем туса уйăх хушшинче 25 тенкĕрен ытла ĕçукçи илеймен граждансенчен вĕсем çак ĕçукçине илнĕ вырăнта вăрçă вăхăтĕнчи налога тытса юлмаççĕ.

Рабочисемпе служащисенчен, литераторсемпе искусство работникĕсенчен налога тытса юлманшăн, е тĕрĕс мар тытса юлнăшăн, çавнашкалах тытса юлнă суммăсене банк учрежденийĕсене вăхăтра паманшăн предприятисен, учрежденисен, организацисен главнăй тата старший бухгалтерĕсене 100 тенкĕ таран штраф тăваççĕ.

2. Хуласемпе рабочи поселоксенче çуртсен управляющийĕсемпе çурт хуçийĕсен 1942 çулти февралĕн 1-мĕш тĕлне районри (хулари) финанс пайĕсене çакăн пек формăпа сведенисем тăратмалла:

Хула (поселок) . . . .
Урам . . . . çурт №-рĕ
Домоуправлени №-рĕ . . . . . е çурт хуçин хушамачĕ

Çуртра пурăнакан 18 çултан аслăрах граждансен (хĕрарăмсемпе арçынсен) спискĕ

№ № йĕркипе	Хваттер №-рĕ	Хушамачĕ, ячĕ тата ашшĕ ячĕ	Хăçан çуралнă	Мĕн ĕçлесе пурăнать е камăн иждивенийĕнче пурăнать	Тупăш илекен вырăнăн ячĕпе адресĕ	Унсăр пуçне тата кĕрĕшсе ĕçлет-и (артельре тăрать-и), ăçта ĕçлет	Хула (район) финанс пайĕ налог тӳлессинчен хăтарни çинчен палла туни. Мĕн пирки хăтарнă.	Палăртса хунă тупăш	Вăрçă вăхăтĕнчи налог хисепĕ	Налог хисепне çĕнĕрен шутласа тĕрĕслени

1942 çулти . . . . мĕш .
Çурт управляющийĕ
(çурт хуçи) . . . .

Асăрхаттарни: 1. Рабочисемпе служащисене, çавнашкалах тата пĕрлештернĕ мастерскойсенче ĕçлекен артель членĕсене ку списока кĕртмеççĕ. Вĕсен çемьинчи ниçта та ĕçлемен 18 çултан аслăрах членĕсене списока кĕртеççĕ.

2. Промыслаллă тата ытти тĕрлĕ артельсен килте ĕçлекен членĕсене ку списока кĕртмеççĕ.

Ытти граждансем çине налог хума кирлĕ сведенисене вăхăтра паманшăн е туллин паманшăн, çак сведенисене тăратас тĕлĕшпе ответлă çынсем çине 100 тенкĕ таран штраф хураççĕ.

Юри тĕрĕс мар сведенисем тăратнăшăн уголовнăй йĕркепе ответ тыттараççĕ.

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕ.

Заводу требуются:

инженеры и техники-конструкторы и технологи по холодной обработке металла, инженеры и техники-калькуляторы, экономисты-плановики, статистик, секретарь-машинистка, машинистки, снабженческие и складские работники, стеклографист, нормировщики, кассир-инкассатор.

Рабочие следующих специальностей:

Токари, фрезеровщики, строгальщики, слесари, сверловщики, электро-монтеры, шлифовщики-заточники, шоферы 1 и 2 класса, авто-слесарь, жестянщики, литейщики, модельщики, сварщики, прессовщики, штамповщицы, зачистчицы, намотчицы, машинист компрессора, наборщики типографии, гальваники, травильщики по металлу, слаботочники, радист, фотограф (по мокроколлоидион. способу), ящечники-упаковщики, плотники, столяры, каменщики, возчики, шорник, печник, дворники, уборщицы, курьеры и подсобные рабочие.

Грузчикам и возчикам предоставляются общежития.
Вахтеры-охранники обеспечиваются теплой одеждой.

ОБРАЩАТЬСЯ: Отдел кадров,—Ленинградская ул., дом № 38, после 12 часов дня.
2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхпе промышленность пайĕсен — 6—83, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 85, издательство конторин—0—23.

НТ 638 Типография №1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2, Ф 6. 58_84 п. л.